ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
29
ВЫРСАРНИКУН
№ 233 (9142)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Хамăр республикăра (1 стр.).
Совет Правительстви Франци, Англи тата США Правительствисене Ют çĕршыв Ĕçсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă нота (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: И. Новиков.—Аялтан килекен критикăна пур майсемпе те аталантармалла (2 стр.).
В. Максимов, Г. Андреев, Н. Герасимов.—Мĕншĕн министерствăсенче хаçат-журнал сарас ĕç начар пырать? (3 стр.).
Александр Артемьев. — Пĕр чĕлхерен. Калав (3 стр.).
К. Ильин.—Колхоз пасарĕсем çинчен (3 стр.).
Хĕвеланăç Европăри ултă çĕршывăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Гаага хулинчи конференцийĕ (4 стр.).
Монголи Халăх Республики 29 çул тултарни (4 стр.).
Афганистанри хаçат США-н Азири политикине сивлет (4 стр.).
Л. Агаков.—Лайăх картина (4 стр.).

Парти райкомĕсен ĕçне—çĕнĕ задачăсен çÿлĕшне

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви колхозсене, МТС-семпе совхозсене тĕреклетме материальнăй-техникăлла условисене пурне те тăвасçĕ. Анчах çав условисен хăйсем тĕллĕнех паха çитĕнÿсем туса памасçĕ. Ялхуçалăхне малалла хăвăрт аталантарма партипе правительство туса паракан условисене лайăх усă курас тесен, колхозсемпе совхозсенчи мĕнпур хăйсемпе резервсене ĕçе кĕртни, колхозлă ятти ĕçченсен анлă массисене кĕрешĕве çĕклени кирлĕ. Çавна май парти организацийĕсем умне çавăн пек пысăк задача туса тăрать: колхозлă яли политикăлла тата организаторла ĕçсене татăклăнах вăйлатмалла.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ, ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕллĕпе умра тăракан задачăсене шута илсе, партин районти аппаратне çĕнĕ урăхлатса çĕнетме, колхозсене тата МТС-сене ертсе пырас ĕçри обезличкăна пĕтерме, районсенчи партипе совет руководстви опытлă кадрсемпе тĕреклетме йышăнчĕ. Кунпа пĕрлех массăсем хушшинче политикăлла ĕçе йĕркелес тĕллĕпе партин районти аппаратне отраслĕпе ÿстерме, политикăлла тата организаторла мĕнпур ĕçсене колхозсемпе совхозсен производствипе патне çывăхартма кирлине палăртрĕ. Парти организацийĕсен,—тенĕ Пленум йышăннă постановленире,—хăйсен пĕтĕм ĕçĕпе колхозсенчи, МТС-семпе совхозсенчи малта пыракан çынсем, çĕрĕçĕн тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн кунтан-кун ÿссе пыракан ÿсĕмне çине таянса ĕçлемелле.

Юлашки вăхăтра пирĕн республикăри парторганизацисен районсенчи конференцийĕсем пулса иртрĕç. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановленине пурнăçлама массăсене мобилизацилесси конференцисен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнчĕ. Мĕн кăтартса панчĕ-ха çак конференцисем? Парторганизацисен партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕн решенийĕсем çинчен колхозниксене, МТС-семпе совхоз рабочийĕсене ăнлантарма парас тĕллĕпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕç. Чылай районсен, колхозсен, МТС-сен руководстви çĕнĕ татса опытлă кадрсемпе çирĕпленчĕ. Парти райкомĕсен пуçарнипе нумай колхозсен хуçалăха аталантарма паха майсем тупса, çитес икĕ-виçĕ çул валли çĕнĕ плансем тунă. Çав плансенчен акă мĕн курăнать: мĕнпур вăйсемпе резервсене хускатса ĕçе кĕртсен, пирĕн республикăри кашни колхоз харпăр хăй хуçалăхне тупăшне халăхинчен икĕ хут, виçĕ хут ÿстерме пултарать.

Анчах парти райкомĕсем хăйсен ĕçне ытла та вăрахăн урăхласа çĕнетеççĕ. Районти конференцисене пурнăçне те коммунистсем çакна палăртрĕç: парти райкомĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă постановленине пурнăçлас тĕллĕпе колхозлă ялти ĕçченсен кĕрешĕвне кирлĕ пек пуçарса ертсе пымасçĕ-ха. Хăшпĕр райкомсем колхозсене, МТС-сене ертсе пырас ĕçе халичченхи пекех çиелтен тата бюрократла-администраторла меслетпе туса пыраççĕ, чĕрĕ ĕçе, массăсем хушшинче туса пымалли ĕçе, канашлусем тата ларусем ирттерни, темĕн чухлĕ решенисем йышăнни вытсе хураççĕ. Уйрăм райкомсем çавăрах колхозсемпе тачă çыхăнса тăмасçĕ, кашни колхозра ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕплĕн пĕлмесçĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ юлса пыракан колхозсемпе МТС-сен ĕçне лайăхлатма, ялхуçалăхĕн юлса пыракан отраслĕсене хăвăртрах çĕклеме вĕсем вĕçĕ ĕçсем тăвайманнасçĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕ ялхуçалăхне чылайранах юлса пырать. Ĕнтĕ... семпе машина-трактор станцийĕн тĕреклетес тĕллĕпе райком решенийĕсем нумай йышăнать. Анчах вĕсем çуркаланмаççĕ. Мĕншĕн? Кун пирки парторганизацин районти конференцийĕнче Мичурин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Душкин юлташ çапла каларĕ: КПСС райкомĕн секретарĕсем колхоз бригадисене çитсе курмаççĕ, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшмаççĕ.

Паллах, политикăлла тата организаторла ĕçе вырăнта, колхозниксемпе механизаторсен анлă масси хушшинче туса пымасан, лайăх решени те хут çинче çеç тăрса юлать. Решенисене организаторла ĕçсемпе çирĕплетсе пымăри КПСС Сĕнтĕрвăрри райкомĕн чи пысăк çитменлĕхĕсем пулса тăрать. Ялхуçалăхне хăвăрт çĕклеме районĕн пурне майĕсем пур. Анчах çав майсемпе усă курмасăн, тепĕр чухне вĕсене тĕпчесе пĕлмени чăрмантарать. Ку çитменлĕх вăл пултăр тесен, ертсе пырас ĕçе канцелярилле-бюрократла меслетпе туса пыма пăрахмалла. Парти райкомĕ ĕçе вăхăтĕн пысăкрах пайне колхозниксемпе механизаторсем хушшинче ирттерме тивĕçлĕ.

Коммунистсен анлă масси парти ĕçне çĕрĕк туса пыракан работниксене тÿсме пултараймасть, тÿсме те юрамасть. Куславкка районĕнчи парторганизацин конференцийĕнче райкомăн пĕрремĕш секретарĕ пулнă Евдокимов юлташпа райком секретарĕ пулнă Колпакова юлташсене ĕçсем пырас ĕçе тепĕр хут суйламарĕ. Акă мĕншĕн: Евдокимов юлташ партипе советсен вырăнти органĕсен ĕçне политикăлла руководительле пек пулса ертсе пырайман. Райком работникĕсем партилле-политикăлла ĕçе йĕркелекенсем, массăсен организаторĕсем пулса тăрас вырăнне, колхозсем тăрăх тĕрлĕ сведенисем, решенисем йышăнма материалсем пухакан çынсем пулса кайнă. Райком бюровĕ ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçе пуçламăшри парторганизацисем çине таянса мар, уполномоченнăйсем урлă туса пынă.

Парти райкомĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçне социализмла ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене хăвăртрах пурнăçлас тĕллĕпе туса пымалла. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ÿстерессишĕн, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç юлса пынине пĕтересси, вылăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлеме çирĕп никĕс тăвасси, вылăхсен йышне нумайлатнипе пĕрлех вĕсенчен илекен тупăша татăклăнах ÿстересси—уйрăмах пысăк задача пулса тăрать. Çак вăхăтрах колхоз производствин кая юлнă отраслĕсене—çĕрулми, пахча çимĕç лартса тăвас ĕçсене вăйлатни кирлĕ.

Çавăн пек тума пирĕн пысăк майсем пур. Колхозлă ялта çĕрĕçĕн тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсем—малта пыракансем нумай. Хуçалăха çĕнĕлле ертсе пырас ĕçре те малта пыракансем паха опыт туянчĕç. Ялхуçалăхĕ хăвăтлă техникăпа хĕçпăшалланчĕ. Колхозниксен творчествălla активлăхĕ пĕрмай ÿссе пырать. Парти райкомĕсен тивĕçĕ—ялти коммунистсене, колхозниксене хуçалăхри мĕнпур майсемпе усă курма мобилизацилесси, колхозлă ял ĕçченĕсене малта пыракансен опычĕпе тата наука çитĕнÿлĕхĕсемпе хĕçпăшаллантарасси. Паллах, парти работникĕсен хăйсен те колхозсен экономикине тĕплĕн пĕлес пулать, наукăпа практикăра аталанакан çĕннине, малта пыраканнине тĕпчесе пĕлмелле, колхоз производствинчи ĕçсене активлă хутшăнас пулать, массăсем шухăш-кăмăлĕсене пĕлсе тăрас пулать.

Парти райкомĕсен партилле-политикăлла ĕçĕн пур формисемпе те усă курмалла. Уйрăмах ялхуçалăх ĕçченĕсем социализмла ăмăртăвне ертсе пырассине лайăхлатмалла, ку ĕçри формализма хăвăртрах пĕтермелле. Çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленесси, вылăхсене тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарасси халĕхи вăхăтри тĕп задача пулса тăрать. Ăна пурнăçлама колхозлă ялти мĕнпур ĕçченсене мобилизацилемелле. Парти райкомĕсен колхоз кадрĕсене—председательсене, бригадирсене, ферма заведующийĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене воспитани парас тата, çĕрĕç органĕсен ĕçне тĕплĕн пуçарулăхне ÿстерес тĕллĕпе кунтан кун ĕçлемелле. Ку вăл ялхуçалăхне тĕрĕс пулнине, хăй вăхăтĕнче тĕрĕс тата вăхăтра татса пама кирлĕ.

Колхозсенче, МТС-сенчи пуçламăш парторганизацисен парти райкомĕн çирĕп пулса тăрасçĕ. Вĕсен кĕрешÿри пултарулăхне организаторла ролне ÿстермесен, райком пуçлавĕ кирек мĕнле паха пуçару тата путланса ларма пултарать. Пуçламăш парторганизацисене çирĕплетмелле, колхоз производствине вĕсен витĕмне вăйлатмалла. Апла пулсан, пултарулăх коммунистсене хуçалăхри чи ответлă ĕçсен участокĕсем тăрăх вырнаçтарса тухмалла. Парторганизацисен хăйсем тавра партире тăман актива пĕтĕçтермелле, комсомол ĕçне лайăхлатмалла. Уйрăмах хĕрарăмсем хушшинчи ĕçсесене вăйлатни кирлĕ.

Колхозлă ялта партилле-политикăлла тата организаторла ĕçе лайăхлатни—ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама чи кирлĕ условисем. Парти райкомĕсен тивĕçĕ хăйсен ĕçĕн шайне çĕнĕ задачăсен çÿллĕшне çити çĕклесси пулать.

Суту-илÿ работникĕсен канашлăвĕ хупăннă

Ĕнер суту-илÿ работникĕсен республикăри канашлăвĕнче, И. Зайкин юлташ доклачĕ тăрăх прениссем малалла пычĕç. Прение пурĕ 26 çын тухса каларĕ:

Канашлура КПСС обкомĕн секретарĕ С. Исляков юлташпа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ Н. Афанасьев юлташ тухса каларĕç. Вĕсем республикăри суту-илÿ организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕç, суту-илÿ работникĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

Ĕнер канашлу хупăнчĕ.

Канашлу çинчен хаçатăн çитес номерĕсенче тĕплĕнрех пичетлесе кăларатпăр.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Паттăрлăх

«Правда» хаçат «Гигант» колхозра сурăхсем пăхса пурăнакан Максим Анифатович Пичко калама çук паттăр ĕç туни çинчен çырса пĕлтерчĕ.

Сталинград облаçĕнчи Сарпински районĕнчи «Гигант» колхоз хăйĕн сурăхĕсене Хура çĕрсем текен вырăнта усрать. Унта хĕллехи вăхăтра та вылăхсене кĕтÿрех çÿретеççĕ. Анчах хĕллехи вăхăтра хăш чухне калама çук вăйлă çил-тăман пулать. Вăйлă çил-тăман тапса тухнă чухне çурăх кĕтÿвĕсем хирте пулсан, сурăхсем çиле майлă чупса кайса вилсе пĕтме пултараççĕ. Ĕлĕк кунта чăнах та çавăн пек пулнă. Халĕ вылăхсене хĕл каçарма витесем нумай лартнă. «Гигант» колхозăн та çĕсенхирта поселок пур. Унта, витесемсĕр пуçне, кĕтÿçсене пурăнмалли çуртсем, магазинсем, тимĕрçĕ лаççи, шкул, медицина тата ветеринари пункчĕсем усăнă. Çапах та асăрханмасан вăйлă çил-тăвăл халĕ те кĕтÿлĕха пысăк сиен кÿме пултарать.

Нумай пулмасть-ха ирхине çантăлăк лăпкă тăнă. Сурăх пăхакан М. А. Пичко сурăх кĕтÿне хире илсе тухнă. Анчах нумай та вăхăт иртмен вăйлă çил-тăвăл тапса тухнă та йĕпе юр çума пуçланă. Хăранă сурăхсем çиле майлă чупса кайма тытăннă. М. А. Пичко сурăхсене чарма асăрнă, пĕрмаях вĕсене хысçăн пынă. Ана пулăшакан Пащенко кĕтÿрен уйрăлнă сурăхсене пăхма аякалла пăрăннă, вăл урăх колхоз витисем патне пырса тухнă, сурăхсене çăлнă. Кун хысçăн та сурăх кĕтÿвĕ пĕрмаях чарăнма пĕлмесĕр малалла вĕçнĕ, хăраса ÿкнĕ сурăхсене ниепле те чарма май килмен.

Çапла М. А. Пичко виçĕ талăк хушши пĕр чарăнмасăр утнă. Хăй ÿкес пекех ывăнса çитнĕ пулин те, вăл пĕр сурăха та çухатса хăварман. Çапла вăл «Гигант» колхоз поселокĕнчен 50 километр аякка кайса тухнă.

Виçĕ талăк иртнĕ хыççăн çил-тăман чарăннă. Хĕвел пăхса янă. Вара сурăхсен çеçенхирти пĕр пысăк тĕмеске патне пырса тăнă.

Часах М. А. Пичкона пулăшма юлташĕсем пырса çитнĕ. Колхозăн сурăх кĕтĕвне çапла çăлса хăварнă, каялла илсе пынă.

(«Правда» хаçатăн ноябрĕн 25-мĕшĕнче тухнă номерĕнчи «Подвиг» ятлă корреспонденци тăрăх).



Мускав. Сталинла премин лауреачĕ И. П. Ширков автомашинăпа кирпĕч турттармалли çĕнĕ май тупнă. Автомашина кузовĕн тĕпне лартма хăмаран тунă щитсем хатĕрлеççĕ. Кирпĕче çав щитсем çине купалаççĕ. Кирпĕч куписене автомашина кузовне лартаççĕ те шалти бортсемпе (кун пек бортсене çĕнĕрен тумалла) хĕстерсе хураççĕ. Çакăн пек тиесе турттарнă чухне кирпĕч ванмасть тата ăна хăвăрт пушатма пулать. Пушатса крансемпе пушатаççĕ. Икĕ бортлă автомашина çине крана кирпĕч тиеме 5 минут, пушатма—4 минут вăхăт кирлĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. П. Ширков шухăшласа кăларнă майпа автомашинăсем çине кирпĕч тиеме хатĕрлесе хунă.

Н. КУЛЕШОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Сĕтел-пуканпа суту-илÿ туни

Потребительсен кооперацийĕ сĕтел-пуканпа суту-илÿ тăвассине сарса пырать. Союзлă министерствăсен предприятийĕсен потребительсен кооперацийĕ валли килес çул, кăçалхипе танлаштарсан, сĕтел-пукан 25 процент нумайрах туса параççĕ.

Халĕ ялти магазинсенче сĕтел-пукан туянас текен çынсен заказ илмелле тунă. Райпотребсоюзсем вырăнти промысленноçпа промысла кооперацине е Центросоюз урлă союзлă министерствăсен тĕп управленийĕсене заказсем параççĕ.

Ялти халăх питĕ лайăх сĕтел-пукан ыйтать. Сăмахран, гардеробсем, буфетсем, кĕнеке шкафĕсем, хитре сĕтел-пукан илесшĕнсем нумай. (ТАСС).

Киргизири садсем

ФРУНЗЕ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Халĕ Киргизири садсенче улма-çырла йывăççисен тата виноград йывăççисен лартаççĕ. Çакăн пек кая юлса лартнă йывăççем питĕ лайăх чĕрĕлни палăрнă. Султалăк иртнĕчен Чуй айлăмĕнче, Ош, Джалал-Абад тата ытти облаçсенче садсен лаптăкĕ 500 гектар чухлĕ хушăнать.

Фрунзе хули çывăхĕнче сăнавсем тумалли кăтартуллă сад тума пуçланă. Вăл 18 гектар йышăнать. Çак садра сад ÿстерес тата виноград тăвас тĕллĕпе малта пыракан опыта вĕренмелле пулать.

Киргизири сад ăстисем, ученăйсем çĕнĕ сортлă çимĕç йывăççисене шăварса ÿстерессе, çапла садсенчен пысăк тупăш илессе.

Парти пурнăçĕн хроники

КУРГАН. КПСС обкомĕ парти райкомĕсен секретарĕсен виçĕ кунлăх семинарне ирттерчĕ. Семинарта пулнă секретарьсем МТС-семпе колхозсене ĕçлекен парти работникĕсен ушкăнĕсене ертсе пыраççĕ. Вĕсене валли КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă постановленийĕ тăрăх МТС-семпе колхозсене массăлла-политикăлла ĕçе организацилесси, партин ялти организацийĕсен организацилле-партилле ĕçĕ çинчен лекцисем вуласа панă.

Семинарта пулнисем çавăн пекех тата çĕрулмипе пахча çимĕçсем тăваткал тĕмĕн лартасси, парниксемпе теплицăсем тăвасси, пахча çимĕç калчисене торфпа çĕрĕк тăпри чÿлмекĕсенче ÿстересси тата ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ машинăсем çинчен лекцисем итленĕ.

КĂНТĂР САХАЛИНСК. Кунта облаçри вăрманпромхозсенчи агитаторсемпе агитколлективн руководителĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура вăрман хатĕрлевĕсене хушшинче агитаци ĕçне туса пырасси çинчен сÿтсе явнă.

Ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС).

Колхозсенчи гидроэлектростанцисем

ВИННИЦА, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Червоно гвардеец» ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксем (Ярышевски районĕ) Лядова юханшывĕ çинче гидроэлектростанци туса пĕтернĕ. Çак гидроэлектростанци ĕслеме пуçланă хыççăн районти мĕнпур ялсене электричество кĕртсе çитернĕ.

Винница облаçĕнчи колхозсем хăйсен хуçалăхĕсене электрификацилеме юханшывсене анлăн усă кураççĕ. Джулински районĕнчи Чернятка ялĕ патĕнче Кăнтăр Буг юханшывĕ çинче хăватлă гидроэлектростанци тума пĕтереççĕ. Çак станци тунă çĕре 20 ялхуçалăх артелĕ хутшăннă.

Халĕ Винница облаçĕнчи ялсенче тата 12 электростанци тăваççĕ.

Хамăр республикăра

Кинофестиваль пулать

Малта пыракан колхозсен, совхозсен, МТС-сен ĕç опычĕсемпе тата пирĕн çĕршыв агробиологи наукин ÿсĕмĕсемпе пур колхозниксемпе МТС работникĕсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тĕплĕн паллаштарас шутпа кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1954 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен ялхуçалăх фильмĕсене кăтартмалли Пĕтĕм Союзри кинофестиваль иртерĕççĕ.

Кинофестивале лайăх хатĕрленсе иртерес тĕллĕпе пирĕн республикăра комиссисем уйăрнă. Çавăн пек комиссисене те пулаççĕ.

Декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа колхозсемпе МТС-сенче ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем вулама тытăнаççĕ. Унта КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем» çинчен йышăннă постановлени, «Çĕрулмине тăваткал тĕмĕн лартасси», «Вылăх апачĕ хатĕрлесси» тата ку тĕллĕпе малта пыракан колхозсен ĕç опычĕ», «Тĕрĕс пусă çаврăнăшĕ—пысăк тухăçлă ялхуçалăх культурисем туса илмелли тĕп условисем», «Пахча çимĕç калчисене торфпа çĕрĕк тăпри чÿлмекĕсенче ÿстересси», «Ялхуçалăх машинисене юсамалли çĕнĕ меслетсем», «Пысăк тухăçлă пăри туса илесси» и ытти темăсемпе лекцисем пулмалла.

Кашни лекци хыççăн ăна содержанийĕпе çыхăнтарса кинофильм кăтартаççĕ. Çавăн пек кинофильмсене халĕ вуна районта ярса панă. Кинофестивальте малтан ку вăхăтĕнче «Новости сельского хозяйства», «Межсортовая гибридизация сельскохозяйственных культур», «Хорошие семена—залог высокого урожая», «В мире уг печей», «Откорм свиней», «Жизнь растений», «Колхоз имени Тимирязева» тата ытти кинофильмсене те пăхаççĕ. Çав кинофильмсене районсенчи культура учрежденисене, колхозсене — киностационарсемпе передвижкăсем кăтартаççĕ.

Фестивале вăхăтĕнче ытти фильмсем те кăтартмалла.

Етĕрнери училище ялхуçалăхĕнче ĕçлеме механизаторсем вĕрентсе хатĕрлет. Пулас механизаторсене вĕрентме училищĕре ялхуçалăх машинисемпе мастерскойсем çителĕклĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: училищĕре вĕренекенсем урокра. Преподаватель Евгений Александрович Зрячев юлташ трактор çинчен вĕрентет.

А. КОСТИН фотоÿкерчĕкĕ.

Конституци кунĕ умĕн

Чăвашсен педагогика институчĕнче вĕренекен студентсем ССР Союзĕн Конституцийĕн кунне паллă тума хатĕрленеççĕ. Вулав пÿлĕмĕсемпе кабинетсенче «Социализм çĕнтерĕ çĕршывăн конституцийĕ» темăпа витринăсем организациленĕ. Институтра кашни вĕренÿ ушкăнĕнче «Пирĕн çĕршыв Конституцийĕ—чи демократлă конституци» темăпа калаçусем иртереççĕ.

Декабрĕн 5-мĕшĕнче студентсен пухăвне ирттерме палăртнă. Пуху хыççăн художество пултарулăхĕ ушкăнĕсен концерт парать.

В. ШАЛТАНКИН.

Шеф пулăшăвĕ

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Сĕнтĕр вăрман комбиначĕн коллективĕ Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артельне шефа илнĕ. Витесем тума тата юсама пысăк хăма сурса, парникĕ валли рамăсем туса панă. Авăн çапас тата тырă тасатас ĕçсене механизацилеме куçса çÿрекен двигатель ярса панă.

Комбинат ытти колхозсене те пулăшать. Вĕсем валли 382 фестметр хăма сурнă. Маленков ячĕпе тăракан колхоз парникĕ валли 100 рама тунă. «Коминтерн» колхоза та рамăсем туса пама йышăннă.

IV-мĕш КВАРТАЛТА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧУВАШЛЕС» ТРЕСТ ЕНĔПЕ 1953 ÇУЛХИ НОЯБРĔН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Çул хĕррине илсе тухнă	Турттарса кăларнă
Улатăр	68,1	4,6
Элĕк	—	—
Вăрнар	11,6	—
Йĕпреç	5,6	8,1
Ишлей	—	—
Калинино	4,3	6,4
Канаш	1,0	1,0
Комсомольски	3,0	4,0
Красноармейски	—	—
Хĕрлĕ Чутай	2,8	—
Кувакино	46,8	0,5
Сĕнтĕрвăрри	—	—
Муркаш	—	—
Первомайски	54,2	—
Пăрачкав	10,7	19,8
Советски	—	—
Сĕнтĕр	—	—
Вăрмар	—	6,4
Çĕрпÿ	4,7	—
Чкаловски	39,1	31,0
Чурачăк	—	—
Шăмăршă	—	4,8
Шăхасан	—	—
Çĕмĕрле	26,6	10,3
Етĕрне	—	1,5
Елчĕк	—	2,5
Тăвай	4,1	—

Учительсен канашлăвĕсем

ЭЛĔК. Районта учительсен канашлăвĕсене ирттерчĕç. Унта «Тĕнчери лару-тăру тата халăхсен миршĕн кĕрешни», «Совет çыннисен сисĕмĕлĕх», «Ачасене çемьере коммунизмла воспитани парасси» тата ытти темăсем тăрăх та лекцисем итленĕ.

Çавăн пекех канашлусенче вĕренÿ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕн итогĕсене пăхса тухнă.

В. ПЕТРОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Аялтан килекен критикăна пур майсемпе те аталантармалла

Критикăпа самокритика ĕçсыннисен активлăхне ӳстерме, вĕсен пултарулăхĕпе пуçарулăхне хамăр çĕршывра коммунизм тăвас ĕçе мобилизацилеме пулăшать.

Критика, уйрăмах аялтан килекен критика, партипе совет, хуçалăх тата ытти организацисен ĕçĕсенчи ситменлĕхсене тупса палăртма май парать. Аялтан килекен критика, ăна тĕрĕс тата партилле йĕркелесен, ертсе пыракан работниксене хăйсен ĕçĕнчи ситменлĕхсемпе йăнăшсене курма тата вĕсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать. Ситменлĕхсене пĕтерме пулăшать çеç мар, вăл кадрсене партипе государство интересĕсене пĕрмаях пысăк вырăна хурса ĕçлеме вĕрентет. КПСС Уставĕ парти членĕсене критикăпа самокритикăна аталантарса пыма, ĕçри ситменлĕхсене тупса палăртса тата вĕсене пĕтерсе пыма, ситĕнӳсемпе шавлăн мухтаннине тата ĕçри ăнăçусемпе çырлахса ларнине хирĕç кĕрешме хушать. КПСС членĕ партин пухăвĕсенче партин кирек хăш работникне те критиклеме пултарать.

Партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене тата КПСС Уставне тĕплĕн вĕренни Канаш хулинчи парторганизацире критикăпа самокритикăна вăйлатма пулăшрĕ. Коммунистсемпе ытти ĕçсыннисем ĕçри ситменлĕхсене, вĕсем камран килнине хăюллăнрах кăтартса пама пуçларĕç. Парторганизацисенче критикăпа самокритика вăйланнине нумаях пулмасть пулса иртнĕ пуçламăш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсем тата хулари парторганизацин VIII-мĕш конференцийĕ кăтартса пачĕç. Анчах, ку ĕç пур пуçламăш организацисенче те лайăх пулса пырать теме çук-ха.

Хăшпĕр руководительсем критикăна хĕсме пăхаççĕ. Сăмахран, кайăк-кĕшĕк комбинатĕнчи стена хаçачĕ пуçламăш парторганизаци секретарьне Кузьмина юлташа агитаторсене ситтелĕклĕ ертсе пыманшăн критикленĕ пулнă. Кузьмина юлташ хăй йăнăшне тӳрлетес вырăнне, стена хаçатне илсе пăрахнă та, редактора вăрçма тытăннă, ăна киревсĕр сăмахсемпе кӳрентернĕ, статья авторне пĕлесшĕн пулнă. КПСС хула комитечĕ Кузьмина юлташ çинчен ятарласа сӳтсе явнă, ăна пуçламăш парторганизаци секретарĕнчен хăтарчĕ.

Каваншторгăн 2-мĕш столовăйĕнчи работница Гуркина юлташ пĕр пухура столовăй заведующине Ильин юлташа критикленĕ. Ильин юлташ, критикăна йышăнса ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçе йĕркелесе ярас вырăнне, Гуркина юлташа хĕсĕрлеме тытăннă. КПСС хула комитечĕ ку ĕçе пăхса тухса, Ильин юлташа çирĕп ответ тыттарчĕ.

Парторганизацин хулари VIII-мĕш конференцийĕнче тухса калаçнă делегатсем КПСС хула комитечĕн секретарĕсен, бюро членĕсен, хула исполкомĕн председателĕпе заместителĕн тата хуçалăхпа ытти организацисен руководителĕсен ситменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса пачĕç. Тӳрех калас пулать, пухусенче тата конференцире тухса калаçнă юлташсем хăйсен критикăлла асăрхаттарăвĕсемпе КПСС хула комитетне ĕçри пысăк ситменлĕхсене курма, вĕсене пĕтерес енĕпе конкретлă ĕçсем тума пулăшрĕç.

КПСС хула комитечĕ хăйĕн членĕсене ĕçе сахал хутшăнтарнă пулнă. Партконференцире делегатсем куншăн партин хула комитетне хытă критиклерĕç. КПСС хула комитечĕ, çак критикăна шута илсе, хăйĕн членĕсене ĕçе ытларах хутшăнтарма тытăнчĕ, вĕсен опычĕпе пултарулăхне асра тытса хула комитечĕн пайĕсем çумне çирĕплетрĕ. Çапла туни хула комитечĕпе унăн членĕсен хушшинчи çыхăнăва тата ытларах çирĕплетме пулăшĕ.

Конференцире ертсе пыракан хăшпĕр работниксем критика çине кирлĕ пек пăхманнине кăтартса пачĕç. Хулари «Сталинский путь» хаçат вагонсем юсакан заводри парткома цехри парторганизацисене куллен ертсе пыманшăн, профсоюз завкомне социализмла ăмăртăва организацилесе пыманшăн тата строительствăпа монтаж кантурне коллективлă договорсене пурнăçламаншăн критикленĕ. Анчах çав организацисен руководителĕсем ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

СССР Çул-йĕр министерствин строительствăпа монтаж кантурĕ строительство ĕçне япăх йĕркеленĕ: пур механизмсемпе ĕçре ситтелĕклĕ усă курмаççĕ, рабочисем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе йĕркелемен. Çавăн пирки ĕç дисциплини япăхса кайнă, строительство планĕ пурнăçланмасть. Строительство хăйне планран 1.081 пин тенкĕлĕх ӳстерсе янă. Ку ситменлĕхсене коммунистсем хăйсен пухăвĕсенче пĕр хут çеç мар кăтартса панă, анчах кунти руководительсем критикăна шута илмен, ĕçе лайăхлатасшăн тăрăшман.

Парторганизацисен коммунистсен тата партире тăман ĕçсыннисен активлăхне ӳстерессишĕн тăрăшмалла, вĕсене ĕçри ситменлĕхсем çинчен пухусенче уççăн калаçса пама, çав ситменлĕхсемшĕн айăплă çынсене критиклеме вĕрентмелле. Çав вăхăтрах вĕсем кăтартса паракан ситменлĕхсене пĕтерме тăрăшмалла, самокритикăпа аялтан килекен критикăна пур майсемпе те вăйлатмалла.

Аялтан килекен критика парти, совет тата ытти организацисен ертсе пыракан работникĕсене ситменлĕхсене курма, партипе государство дисциплинине пăсакансене тупма пулăшать. Инюткин юлташ депо начальникĕ пулса ĕçлет, анчах вăл ку ĕçе ситтелĕксĕр ертсе пырать. Депора ĕç тухăçлăхне ӳстерме пур майсемпе тата резервсемпе усă курмаççĕ. малта пыракан рабочисен опытне сармаççĕ, кадрсен техникăлла пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çавăнпа та депо производство планне пурнăçлаймасть, кăçал 3.400 тонна ытлашши топливо çунтарса, государствăна 864,3 пин тенкĕлĕх убыток кӳнĕ.

Инюткин юлташ çак ситменлĕхсене пĕтерессишĕн коллектива мобилизацилессишĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешес вырăнне, вăхăта ĕçкĕпе ирттерет, работниксемпе харкашать. Инюткин юлташăн ситменлĕхсем çинчен, вăл хăйне хăй тыткалама пĕлменни çинчен депора коммунистсем тата рабочисем хăйсен пухăвĕнче час-часах кăтартса панă, анчах вăл ăна шута илмен. Вара Инюткин юлташăн ĕçĕсем çинчен КПСС хула комитечĕ хăйĕн бюровĕнче сӳтсе явнă, ун пирки парти дисциплинине хушнă пек çирĕп мерăсем йышăнмалла пулчĕ.

Хулари организацисем ĕçсыннисенчен çырусемпе жалобăсем куллен илсе тăраççĕ. Çав çырусемпе жалобăсене вăхăтра пăхса тухса ответ пани, вĕсем тăрăх çийĕнчех мерăсем йышăнни ĕçе лайăхлатма пулăшать. Ĕçсыннисен çырăвĕсемпе жалобисем партин хула комитетне хулари хăшпĕр организацисенчи пысăк ситменлĕхсене тупма пулăшрĕç. Партин хула комитечĕ çырусемпе жалобăсенче кăтартса панă ситменлĕхсене пĕтерме çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăнчĕ, айăплă çынсене ответ тыттарчĕ.

Анчах чылай организацисенче ĕçсыннисен çырăвĕсемпе жалобисем çине кирлĕ пек пăхмаççĕ-ха. Вагонсем юсакан заводри партком, завод дирекцийĕ тата заводăн коммунальнăй пайĕ ĕçсыннисенчен çырусем нумай илсе тăраççĕ. Заводри руководительсем çав çырусем çине çийĕнчех ответ парас вырăнне, çырусем çине тĕрлĕ резолюцисем хурса ĕçсыннисен ыйтăвĕсене татса парассине вăраха тăсаççĕ. Çыру çыракансем пĕр организацире ответ илеймен пирки, çав ыйтăва татса пама сӳлте тăракан организацисене çыраççĕ, вара ĕç тата та вăраха каять. Пĕр ыйтăва татса парас тĕлĕшпе темиçе учреждени работникĕсен ĕçлеме тивет.

Критикăпа самокритикăна анлă сарас тĕлĕшпе пирĕн парторганизаци умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсене пурнăçлама КПСС Канаш хула комитечĕ пур коммунистсене те мобилизацилет, партипе совет, хуçалăх тата ытти организацисен ĕçĕнчи ситменлĕхсене пĕтерсе пырать, вĕсен ĕçне лайăхлатма тăрăшать.

И. НОВИКОВ,
КПСС Канаш хула комитечĕн секретарĕ.

Çамрăксене политикăлла воспитани парас ĕçе вăйлатмалла

Вăрнар районĕнчи комсомол организацийĕн конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци ВЛКСМ райкомĕн çулталăкри ĕçĕсем çинчен тунă отчетлă доклада сӳтсе явнă.

Парти организацийĕ ертсе пынипе, районти комсомол организацийĕ иртнĕ отчетлă тапхăрта çамрăксен политикăлла тата производствăри активлăхне ӳстерес тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем тунă. Колхоз производствинче тата предприятисенче ĕçлекен çамрăксен социализмла ăмăртăвĕ вăйланнă.

Çапах та çамрăксене политикăлла воспитани парас ĕç ситтелĕксĕр пулса пырать.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче парти историне пĕрремĕш çул вĕренмелли кружоксем 18, пĕрремĕш çул вĕренмелли политшкулсем 8, пуçламăш политкружоксем 22 йĕркеленĕ. 103 комсомолец парти вĕренĕвне хутшăннă. Унсăр пуçне 106 комсомолец марксизм-ленинизм теорине харпăр хăй тĕллĕн вĕренме кăмăл тунă. Анчах хăшпĕр политшкулсемпе кружоксенче занятисем йĕркеллĕ иртмеççĕ.

Мăн Турханти Ленин ячĕпе тăракан колхозри политкружок пропагандисчĕ Зайцев юлташ программăри материала вуласа парать кăна. Çавăн пирки вĕренекенсем материала ăнланман. Юлашкинчен чылай комсомолецсемпе çамрăксем занятисене çӳреме пăрахнă.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренме кăмăл тунă комсомолецсен шучĕ пысăк. Анчах та вĕсемпе ĕçлесси япăх пулса пырать. Консультантсем вĕренекенсен ĕç планĕсемпе паллашса та ситмен, чылай комсомолецсен план çук. ВЛКСМ райкомĕ çак ĕçе начар ертсе пырать.

Çамрăксем хушшинче лекцисемпе докладсем ирттерес ĕçе те ситтелĕксĕр йĕркеленĕ. Штатра тăман докладчиксен лекци тезисĕсене сӳтсе явмаççĕ. Чылай докладчиксем кăçал пĕрер лекци кăна ирттернĕ.

ВЛКСМ райкомĕ пуçламăш организаци секретарĕсен вĕренĕвне кирлĕ пек йĕркелемен. Семинарсем сахал ирттерет.

Конференци ВЛКСМ райкомĕн çĕнĕ составне тата республикăри комсомол конференцине кайма делегатсем суйларĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.
(Хамăр корр.).

Совет Правительстви Франци, Англи тата США Правительствисене Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă нота

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Франци, Англи тата США Правительствисенчен пĕр пек нотăсем илнĕ. Вĕсене ноябрĕн 3-мĕшĕнче Совет Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă нотăна ответлесе çырнă.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Францин, Англин тата США-н Мускаври Посольствисене Совет Правительствин ответлă нотине ярса панă.

Аяларах Франци Правительстви 1953 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче панă нотăна тата Совет Правительстви 1953 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче панă нотăна пичетленĕ.

Франци Правительстви 1953 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче панă нота

Франци Посольстви Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствине хисеплениие палăртать тата çакăн çинчен пĕлтерет:

I—Франци Правительстви, Америкăпа Британи Правительствисемпе тачă çыхăнса, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нотăна тĕплĕн тĕпчесе вĕренчĕ, вăл нотăна Лугано хулинче ноябрĕн 9-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен тăватă Министрĕн канашлăвне пухма сĕнсе Франци Правительстви октябрĕн 18-мĕшĕнче панă нота çине ответлесе çырнă пулнă. Тепĕр енчен, Германин федеральнăй республикин Правительствипе тата Германин Берлинри влаçĕсемпе те консультацисем ирттернĕ.

II — Франци Правительстви пăшăрханса çакна паллă тăвать: юлашки тăватă уйăх хушшинче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви хăйне канашлăва хутшăнма чĕннине виççĕмĕш хут сирсе ячĕ. Совет Союзне канашлăва хутшăнма чĕнсе каланине тĕнчери васкавлă ыйтусене тĕпчесе пĕлес тĕллевпе панă. Франци Правительстви малашне те çапла шутлать—тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалли чи лайăх меслетсенчен пĕри вăл çине тăрса тăрăшнипе хальхи вăхăтри йывăрлăхсене, чи малтанах, хăвăрт сирсе ямалли йывăрлăхсене пĕрин хыççăн теприне пĕтермелли майсене шырасси пулать. Çак шухăша асра тытса, Франци Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен тăватă Министрĕн канашлăвне пухасси çинчен сĕнӳ паначчĕ. Çав канашлăва Германи лартакан ыйтусене, уйрăммăн илсен, Германие тепĕр хут ирĕклĕн пĕрлештерес ыйтăва, тепĕр енчен, Австрин государство договорне тăвасси çинчен лартнă ыйтусене татса парас тĕллевпе, çавăн пекех Корейăри политикăлла конференцие пухассине пурнăçлама май килтĕр тесе тăрăшас тĕллевпе пухмалла.

III — Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви, унăн ноябрĕн 3-мĕшĕнчи нотинче каланă тăрăх, Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне хутшăнтарса пухма палăртать, Китай представителĕсĕр ирттернĕ канашлу усăсăр та вĕçĕмсĕр тавлашусем ăшне путать, кунсăр пуçне, васкавлă ыйтусене татса парас ĕçре нимĕнле ăнăçлăх тума та май пулмасть, тесе шутлать.

IV — Франци Правительстви канашлăва чĕнсе калани çумне нимĕнле условисем те хушмасть, вăл, май пур таран, Совет Правительствин шухăшĕсене шута илме тăрăшать. Вăл вара, пачах урăхла, Ют çĕршыв ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухассине малтан кăларса тăратнă чылай требованисемпе çыхăнтарать. Вĕсенчен хăшпĕрисем Европа ыйтăвĕсемпе нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмаççĕ, анчах çав требованисене, Совет Правительствин шухăшĕпе, Европăри ыйтусене тĕпчесе вĕренме тытăничченех татса памалла иккен. Ытти требованисем Францин, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен хăрушсăрлăхне тумалли мĕнпур плансене пăрахăçлама шутланине пĕлтереççĕ. Хӳтлĕхсĕр Хĕвеланăç Европа — Совет Союзĕ канашлăва хутшăннăшăн илес текен хак çакăн пек пулас. Çакăн пек требованисемпе пачах килĕшме май çуккине Совет Правительстви пĕлмесĕр тăма пултараймасть.

V — Франци Правительствин, Совет Союзĕн юлашки нотине кура, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви хальхи вăхăтра лайăх результатсем пама пултаракан калаçусем ирттерме килĕшмест, тесе шутлама тивет. Çапах та Франци Правительстви, чи васкавлă ыйтусем тăрăх килĕшӳсем тăвассине пурнăçлас тесе, май килекен мĕнпур меслетсемпе малашне те усă курма çирĕппĕн шутлани çинчен пĕлтерет. Вăл ыйтусене татса пани тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма кирлĕ. Çавăнпа та Франци Правительстви октябрĕн 18-мĕшĕнче Совет Правительствине канашлăва хутшăнма чĕнсе çырнине тепĕр хут çирĕплетсе калать. Франци Правительстви çакна ĕненсе тăрать: пурнăçра кирлĕ ыйтусем тăрăх калаçусем ирттерни анлăрах килĕшӳ тумалли çул-йĕр хатĕрлĕччĕ, çапла майпа пĕтĕм тĕнчере чăн-чăн мире тепĕр хут тума пулăшаччĕ.

Совет Правительстви 1953 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче панă нота

Совет Правительстви кăçалхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче Франци Правительстви ярса панă нотăна илни çинчен пĕлтерет. Çак нота вăл Совет Правительстви ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нота пирки ответ пани пулать.

Франци Правительстви çапла пĕлтерет: тĕнчери чи васкавлă ыйтусем тăрăх Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă сĕнĕве СССР Правительстви сирсе янă, тет. Кун пек çирĕплетсе калани чăнлăхпа килĕшсе тăмасть, вăл Совет Правительстви ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нотăна тӳрремĕнех хирĕç пырать.

Паллă ĕнтĕ, тĕнчери чи васкавлă ыйтусем тăрăх Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă сĕнĕве Совет Правительстви çав нотăра сирсе яман кăна мар, пачах урăхла, СССР Правительствин сĕнĕвĕ Франци Правительствин сĕнĕвĕпе пĕр пек мар пулин те, çакăн пек канашлăва хутшăнма пултарни çинчен тепĕр хут çирĕплетсе каларĕ.

Совет Правительстви çакăн пек сĕнӳ панă:

«Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухмалла тата вăл канашлура çак ĕçсене тумалла:

1. Францин, Англин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Китай Халăх Республикин, Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем тăвасси çинчен пăхса тухмалла.

2. Францин, Англин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче Германи ыйтăвне, çавăнпа пĕрлех канашлăва хатĕрленнĕ май панă мĕнпур сĕнӳсене те, сӳтсе явмалла».

Совет Правительстви çакăн çинчен аса илтерни кирлĕ тесе шутлать: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен панă хăйĕн сĕнĕвне вăл юлашки уйăхсем хушшинче темиçе хутчен те, сăмахран, августăн 4-мĕшĕнче, сентябрĕн 28-мĕшĕнче, ноябрĕн 3-мĕшĕнче кăларса тăратнă.

Çапла вара, Совет Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен çине тăрса темиçе хутчен те сĕнӳ панă. Унта тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăр лару-тăрăва çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва, уйрăмах Германи ыйтăвне пăхса тухмалла. Германи ыйтăвне татса пани Европăра хăрушсăрлăх туса хурассипе, çапла вара тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатассипе тачă çыхăнса тăрать. Совет Правительстви хальхи вăхăтра та çакăн пек канашлу пухма кирлĕ, тесе шутлать. Кун пек канашлăва, Совет Правительствин шухăшĕпе, унта мĕнле те пулин пĕр ыйтăва пăхса тухнипе чаранмалла мар, канашлу тĕнчери чи васкавлă ыйтусене чăннипех пăхса тухма май памалла.

Совет Правительстви, Францин, Англин, США-н, ССР Союзĕн тата Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсене хутшăнтарса, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен пăхса тухма канашлу пухма, çавăн пекех, Францин, Англин, США-н тата ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсене хутшăнтарса, Германи ыйтăвĕ çинчен сӳтсе явма канашлу пухма сĕнни пĕр тĕллеве пăхăнса тăрать. Ку тĕллев çакăн пек: тĕнчери çĕршывсем хушшинчи йывăрлăха çăмăллатма пулăшмалла, уйрăммăн илсен, Европăра çирĕп хăрушсăрлăх туса хума пулăшмалла. Çакă вăл Германи ыйтăвне татăклăн йĕркелеме хушать.

Франци Правительстви те хăй тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма тăрăшни çинчен пĕлтерет. Чи хăвăрт пăхса тухмалли ыйтусем тесе, вăл çак ыйтусене асăнать: Германи ыйтăвĕ, Австрипе государство договорĕ тăвасси, Корейăра политикăлла конференци пухма пулăшасси. Асăннă ыйтусене каласа тухнисем Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче пăхса тухмалли, чи хăвăрт пăхса тухмалли тĕнчери ыйтусем шутне Франци Правительстви Европа, çавăн пекех Ази тĕлĕшпе тăракан паллă ыйтусене кĕртнине кăтартса парать.

Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕнче Азири лару-тăру тĕлĕшпе тăракан ыйтусене те сӳтсе явма кирлине Франци Правительстви йышăнать. Апла пулсан, çавăн йышши ыйтусене пăхса тухас тата йĕркелес ĕçе, ытти тăватă аслă державăпа пĕрлех, Китай Халăх Республики хутшăнма кирли лайăх курăнать. Çакăнпа пĕрлех, уççăн курăнакан çак факта йышăнмасăр тăма нимĕнле сăлтав та çук: тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха çăмăллатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене пĕтĕмĕшле пăхса тухни кирлĕ. Совет Правительстви çавăншăн тăрăшать. Ку вăл Францин, Англин, США-н, ССР Союзĕн тата Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсене хутшăнтарса канашлу ирттерессе вăраха ямасăр тумалли ĕç пулса тăнине пĕлтерет.

Тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухасси кирлĕ. вăраха ямасăр тумалли ĕç пулса тăнă пирки ĕнтĕ, Совет Правительстви мĕнпур аслă державăсене хутшăнтарнипе канашлу пухма кирлĕ тесе шутланă, халĕ те çаплах шутлать. Франци Правительстви хăй те тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма пулăшас тĕллев тытни çинчен пĕлтерет. Апла пулсан, пилĕк державăн—Францин, Англин, США-н, ССР Союзĕн тата Китай Халăх Республикин—канашлăвне пухма кансĕрлекен чăрмавсем те пĕтмелле. Кунтан тата ноябрĕн 16-мĕшĕнче панă нотăра ку ыйту тĕлĕшпе хирĕçлесе каланисем пĕтĕмпех вырăнсăр пулни те курăнать.

СССР Правительстви Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвĕ çинчен ноябрĕн 3-мĕшĕнче хăй панă нотăра каланă шухăша тепĕр хут çирĕплетсе калать.

Çакăнпа пĕрлех, СССР Правительстви каллех çапла пĕлтерет: «Европа çарĕ» текенскерне тумалли плансем, çавăн пекех Европăри чылай государствăсен территорийĕнче ют çĕршывсен çар базисене туни Европăри хăрушсăрлăх интересĕсемпе килĕшсе тăмаççĕ. «Европа çарĕ» текенскерне тумалли плансем Германи милитаризмне çĕнĕрен çĕклеме тата Хĕвеланăç Германие тепĕр хут хĕçпăшаллантарма май туса парать. Европăри чылай государствăсен территорийĕсенче ют çĕршывсен çар базисене туни Европăри ытти государствăсен хăрушсăрлăхне хăратса тăрать.

Франци Правительстви ноябрĕн 16-мĕшĕнчи нотăра çапла каланă: Совет Союзĕ Европа çарне хирĕç тăни «Францин, Великобританин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен хăйсен хăрушсăрлăхне тумалли мĕнпур планĕсене пăрахăçлама» требовани лартнине пĕлтерет, тенĕ. Калас пулать, ССР Союзĕн асăннă позицийĕ ку çĕршывсен хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсем пирки тăракан ыйтăва пачах тĕкĕнмест. Совет Правительстви Франци Правительствин нотинче çавăн пек каланине, нимĕнле сăлтавсăр каланă тесе шутласа, сирсе ярать. Франци Правительстви усăсăр пропагандăлла тĕллевпе тата çакăн пек калать: «канашлăва хутшăннăшăн Совет Союзĕ ыйтакан хак — хӳтлĕхсĕр Хĕвеланăç Европа пулать», тет. Çакăн пек калама та нимĕнле сăлтав çук.

Паллă ĕнтĕ, «Европа çарĕ» ячĕпе улттă государствăн—Францин, Хĕвеланăç Германин, Италин, Бельгин, Голландин тата Люксембургăн—çарне тума хăтланаççĕ. Çапла вара, ку план Европăри государствăсен пĕчĕк ушкăнĕн çарне тума палăртать. çав ушкăна Европăри çĕршывсенчен ытларахăшне кĕртмеççĕ. Европа çарне тăвассин тĕп тĕллевĕ çакăн пек: Хĕвеланăç Германире çĕнĕрен регулярнăй çар тума май памалла, Хĕвеланăç Германи çарне асăннă Европа çарĕн шутне кĕртмелле, вăл унта тĕп вăй пулса тăмалла. Европа çарĕ тунине ĕнерхи гитлеровецсем тата Германири ытти реваншистсем пур майсемпе те ырлаççĕ. Вĕсем хăйсен агрессиллĕ тĕллевĕсене пурнăçлама çĕнĕ вăрçă пуçлама хатĕрленме тăрăшаççĕ. Çав вăрçа вĕсем Германи халăхне кăна мар, Европăри ытти халăхсене те хутшăнтарма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен çав халăхсене Европа çарĕ тăвасси çинчен ирĕксĕрлесе йышăнтараççĕ.

Европа çарĕ тумалли çакăн пек плана пурнăçа кĕртни хăрушлăх пулнине Европăри мĕнпур халăхсем, вăл шутра халĕ çавăн пек çар тăвас ĕçе хутшăнтаракан çĕршывсенчи халăхсем те, ăнланса илеççĕ. Мĕншĕн тесен «Европа çарĕ» текенскерĕн ячĕпе витĕнсе Германи милитаризмне çĕнĕрен ура çине тăратни паллă. Европа çарне туни çакна çеç пĕлтерет: Европăри темиçе государствăран агрессиллĕ ушкăн тăваççĕ Хĕçпăшаллă вăйсем çине, Хĕвеланăç Германири реваншистла çар кĕрекен хĕçпăшаллă вăйсем çине таянса, çав ушкăн хăйне Европăри чылай çĕршывсене хирĕç—Совет Союзне, Польшăна, Чехословакие тата ытти çĕршывсене хирĕç—тăратать. Çапла вара, Европа çарне тумалли план Европăри мире çирĕплетме пулăшма пачах та пултараймасть. Кун пек план Европăн пĕр пайне Европăн тепĕр пайне хирĕç тăратнине пĕлтерет. Çак план тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха çăмăллатасси патне илсе пыма пултараймасть, пачах урăхла, вăл Европăри çĕршывсем хушшинче хирĕçӳсене çивĕчлетĕ, çапла авантюрăлла çĕнĕ вăрçăсем пулас хăрушлăха ӳстерĕ. Çапла вара, Европа çарне туни Германи милитаризмĕн Европăри мир ĕçĕшĕн чи хăрушă вăйĕсене ирĕк парать, тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне туса хурать. Çакна пĕтĕм тĕнчери мире юратакан халăхсем шута илмесĕр тăма пултараймаççĕ.

«Европа çарĕ» текенскерне тăвассине хирĕç тăрса, Совет Правительстви çакна шута илет: çавăн пек çар туни Европăри хăрушсăрлăха тĕреклетме нимĕн чухлĕ те пулăшма пултараймасть, пурпĕрех пачах урăхла результатсем патне илсе пырать. Çавăн пек çар туни «Хĕвеланăç Европăна хӳтлĕхсĕр» юлассинчен хăтарма тăрăшассипе те нимĕн чухлĕ те çыхăнса тăмасть, çав вăхăтрах тата Хĕвеланăç Европăна никам та юнаса хăратмасть.

Хĕвеланăç Европăри çĕршывсен хăрушсăрлăхĕ çапла тусан çирĕп пулать: Хĕвеланăç Европăри çĕршывсемпе Хĕвелтухăç Европăри çĕршывсене пĕр-пĕрне хирĕç тăратмалла мар, Европăри пур çĕршывсем те пĕр-пĕринпе килĕштерсе Европăра хăрушсăрлăх туса хума тăрăшмалла. Çавăн пек тăрăшассине тивĕçлĕ державăсем халиччен хăйсем çине илнĕ обязательствăсене никĕсе хурса туса пымалла, çав обязательствăсен тĕллевĕ Европăра агрессилле çĕнĕ ĕçсем пулассине малтанах асăрхаса сирсе ярасси пулса тăрать.

Европа çарне тăвассине хирĕç тăрса, Совет Союзĕ çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне сирсе ярассине, апла пулсан, Европăра чăн-чăн хăрушсăрлăх туса хурассине пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшать. Совет Союзĕ Европăри ытти çĕршывсемпе пĕрле Европăра хăрушсăрлăх туса хума пулăшма пĕтĕм вăя хурса тăрăшма хатĕр. çакна Европăри ытти мĕнпур çĕршывсемпе, вĕсен общество строй мĕнле пулнине пăхмасăр, кирлĕ пек калаçса татăлса тумалла. Европăри мĕнпур çĕршывсемшĕн хăрушсăрлăх туса хурас тĕллеве пурнăçлама Франципе ССР Союзĕ, çавăн пекех Европăри ытти çĕршывсем те тăрăшсан, çавăн пек хăрушсăрлăх пуласси пĕтĕмпех туса хума май килет. Ку вара çапла тума хушать: Германи ыйтăвне татса пани Европăри хăрушсăрлăха тĕреклетес ĕçре питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулнине асра тытса, ку ыйтăва Германи пĕрлĕхĕпе никама пăхăнманлăхне çĕнĕрен туса хурассине, ăна демократилле тата мире юратакан государство тăвассине пурнăçлас енĕпе татса памалла.

Маларах каланисенчен çакăн пек вывод тума май килет: Франци тата СССР Правительствисем мире тата тĕнчери çĕршывсен хăрушсăрлăхне тĕреклетесшĕн пулсан, вĕсем тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха пĕчĕклетес тĕлĕшпе тумалли мĕнпур ĕçсем çинчен тăракан ыйтăва, çавăн пекех Европăра хăрушсăрлăх туса хурас тата Германи ыйтăвне кирлĕ пек татса парас ыйтăва уйрăммăн, пĕр тăхтаса тăмасăрах пăхса тухассишĕн тăмалла. Çакăн пек ĕнтĕ Совет Правительстви ноябрĕн 3-мĕшĕнче панă нотăри сĕнӳсен шухăшĕ.

Анчах ССР Союзĕпе Франци, çавăн пекех Англи тата США пĕр-пĕрне пана нотăсем малта асăннă сĕнӳсем пирки халиччен пĕр шухăш пуласси патне илсе пымарĕç, çавăнпа та ку ыйтăва Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсем тивĕçлĕ йĕркепе тĕл пулнă вăхăтра пăхса тухмалла. Кунпа пĕрлех Совет Правительстви Франци Правительствин ноябрĕн 16-мĕшĕнчи нотинче каланине. вăл Франци СССР. Англи тата США Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне хăй хутшăнассине малтанах каласа татăлса хăй çине илнĕ нимĕнле условисемпе те çыхăнтармасть тесе каланине асра тытма йышăнать. Англипе США Правительствисем те çавăн пек пĕлтернĕ.

Тĕнчери çĕршывсем хушшинчи татса пама вăхăт çитнĕ ыйтусене хăвăртрах йĕркелеме пулăшма тăрăшса, Совет Правительстви Франци, СССР, Англи тата США Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне хутшăнма хатĕр пулни çинчен пĕлтерет.

Совет Правительстви çакăн çинчен пĕлтерме кирлĕ тесе шутлать: маларах каласа панă шухăшсене шута илсе, ку канашлура вăл тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха пĕчĕклетес тĕллевпе çывăх вăхăтрах Франци, Англи, США, СССР тата Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕсен канашлăвне пухасси çинчен ыйту лартать.

Совет Правительстви çапла шутлать: Берлин хули тăватă державăн Министрĕсен канашлăвне ирттермелли юрăхлă вырăн пулма пултарĕччĕ.

Совет Правительстви çакăн пек нотăсем Англипе США Правительствисене те ярса панă.

Колхоз пасарĕсем çинчен

Партипе правительство ситес ик-виçĕ çул хушшинче халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе партипе совет тата общественнăй мĕнпур организацисем умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕç. Çак пархатарлă задача советла суту-илĕве тĕпрен лайăхлатма хушать.

Суту-илӳ работникĕсен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕнче А. И. Микоян юлташ çакна палăртрĕ: колхозла суту-илӳ советла суту-илĕвĕн уйрăлми пайĕ пулса тăрать, терĕ. Ялти суту-илӳ умне пысăк задачăсем кăларса тăратнă. Вĕсене пурнăçлас тесен, пасарсенче суту-илӳ тумалли условисене чылай лайăхлатас пулать.

Пирĕн Чăваш республикинче колхоз пасарĕсем 50 шутланаççĕ. Колхозла суту-илӳ енĕпе тавар çаврăнăшĕ анлăн пулса пынине кăçалхи виçĕ квартал хушшинче вырăн укçи виçĕ миллион тенке яхăн пухни те лайăх кăтартса парать.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем çинчен йышăннă постановленире государство, коопераципе колхозла суту-илĕве малалла вăйлатмалли программăна палăртса панă. Суту-илĕве малалла лайăхлатма май паракан условисенчен пĕри вăл суту-илӳ тăвакансем çине йĕрĕнсе пăхассине пĕтерни пулать. Пирĕн республикăра уйрăмах колхозла суту-илӳ пирки çавна каламалла. Вырăнти организацисем государствăпа коопераци суту-илĕвне лайăхлатма тăрăшнă пулсан, колхозла суту-илӳ пирки çавăн пек калама хĕн. Ку вăл пуринчен ытла пасарсен материальнăй тата техникăлла никĕсĕ çителĕксĕррипчен курăнать. Пасар пулакан вырăнсене нумайăшне тикĕслесе якатман тата вĕсем тавра карта тытман, унта лупассем, хӳтĕ вырăнсем, япаласем усрамалли склалсем çук. Аш-какайпа сĕт-çу продукчĕсене тĕрĕслес ĕçе япăх йĕркеленĕ. Пĕр пасарта та хĕрлĕ кĕтессем туман.

Советски районĕнчи Вылă, Вăрмар районĕнчи Кавал, Йĕпрес районĕнчи Хурамал, Калинино, Ишлей районĕнчи Ишек пасарĕсене халăх йышлăн пухăнать. Унта юнашар районсенчен те çынсем нумай пыраççĕ. Апла пулин те, асăннă пасарсенче суту-илӳ тума кирлĕ условисем çителĕклĕ мар. Акă, Вылăпа Кавал пасарĕсенче вис̧ме тарасасем çук Нумайăшĕсем таварсене çĕр çинчех сутаççĕ. Кунта санитари йĕркисене пăхăнмаççĕ. Сĕте тата ытти ĕçмелли япаласене стакансемпе кружкăсене çумасăрах ярса параççĕ.

Ытти пасарсенче те йĕркесĕрлĕхсем нумай. Шупашкарти аш-какай тĕрĕслекен станци пасартан икĕ квартал аякра вырнаçнă. Çакă колхозниксене чăрмав кӳрет тата тарăхтарать. Ку пасарăн автомашинăсем çук.

Райсовет исполкомĕсем тата, пуринчен ытла, суту-илӳ пайĕсем ĕçри ситменлĕхсене пĕтерме тивĕçлипе тăрăшсан, пасарсене кирлĕ пек йĕркелесе çитерме пулатех ĕнтĕ. Анчах вырăнти организацисем колхозла суту-илӳ культурине ӳстерме тăрăшмаççĕ-ха. Куславккари пасара пĕтĕмпех япăхтарса янă, анчах суту-илӳ пайĕн заведующийĕ Кузьмина юлташ нимĕнле мера та йышăнмасть. Асăннă ситменлĕх çинчен асăрхаттарсан, Кузьмина юлташ: «вăл Суту-илӳ министерствин ĕçĕ, эпĕ уншăн ответлă мар» тет.

Улатар хула исполкомĕ рынока лайăхлатма панă укçапа урăх ĕçре усă курнă.

Колхозсем хăйсем те тепĕр чухне суту-илӳ йĕркисене пăсаççĕ. Сăмахран хăш пĕр колхозсенче накладнойсем çине таварсене мĕн хакпа сутмаллине çырса памаççĕ. Вара продавец таварсене пасарти хакпа сутать. Çавна пула отчет панă чухне продавец пухăннă укçа шутне пĕчĕклетсе кăтартма та пултарать. Çавнашкал йĕркесĕрлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕсен васкавлă мерăсем йышăнас пулать.

Чăваш АССР Суту-илӳ министерстви колхозла суту-илĕве çителĕксĕр ертсе пырать. Вăл колхозла суту-илӳ культурине ӳстерме, йӳршĕри пысăк хуласенчи (Горькирн, Хусанти) паха опыта вĕренсе хамăр республикăра сарма тăрăшмасть. Пасарсене кирлĕ оборудовани парас тĕлĕшпе нимĕнле йĕркелĕх те çук. Суту-илӳ министерстви иртнĕ çулхине пĕр пасара та тĕрĕслемен. Вырăншăн пухăнакан укçа-тенкĕне мĕнле расходланине документсем тăрăх пачах тĕрĕслемен. Ку енĕпе те йĕркесĕрлĕхсем пурри сисĕвет.

Кунсăр пуçне, колхозсемпе колхозниксем ыйтакан промышленность таварĕсем, пуринчен ытла производствăра тата килте кирлĕ япаласем сутассине йĕркелемелле. Хăшпĕр таварсене халăхи фондсене ӳстермесĕрех чылай сутма пулать. Халĕ пасарсенче тăвар, крассын, шăрпăк, супăнь сайра хутра кăна сутаççĕ Çав вăхăтрах халăх çав таварсене нумай ыйтать, анчах вĕсене пасарта тупса илме хĕн. Республикăри пасарсенче пăта, тĕрлĕ сăрăсем, тимĕр япаласем тата хуçалăхра кирлĕ ытти таварсем сахал сутаççĕ. Çавна пула колхозсен çав япаласене туянма тата хăйсен ытлашши продукчĕсене сутма Горький, Хусан хулисене кайма тивет.

Правительство потребительсен кооперацине колхозсен продукцине комиссие илсе сутас ĕçе организацилеме ирĕк пачĕ. Республикăри потребительсен кооперацийĕ çак паха ĕçе вăраххăн пуçарса пырать-ха. Ялхуçалăх продукчĕсене пасарта коопераци урлă суттарсан колхозниксем хăйсем сутнă чухлех укçа-тенкĕ илнĕ пулĕччĕç, кунсăр пуçне вĕсен транспорт расхочĕсем чакнă пулĕччĕç. Кооперацн суту-илĕвĕн çак форми колхозсемшĕн питĕ усăллă. Ун чухне колхозсене хуçалăхра кирлĕ таварсем сутассине те лайăхрах йĕркелеме пулать. Вара республикăри колхозсен ытти облаçсемпе республикăсене тавар сутма кайса çӳреме те кирлĕ пулман пулĕччĕ. Çавăнпа та çакăн йышши суту-илĕве анлăн сарса пырас пулать.

Пасарсене лайăхлатма çулсеренех пиншер пин тенкĕ укçа расходлаççĕ. Анчах уйăрса паракан укçапа кирлĕ пек усă курмаççĕ-ха. Çакă вăл райсовет исполкомĕсемпе Суту-илӳ министерстви строительство ĕçĕсене хакламаннинчен килет. Акă, Çĕрпӳ хулинче аш-какай павильонне, Етĕрнере — аш-какай тĕрĕслемелли станци çуртне иккĕмĕш çул тăваççĕ ĕнтĕ.

Пасарсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене татах та илсе кăтартма пулать. Суту-илӳ пайĕсен пасарта тата потребительсен кооперацийĕнче ĕçлекенсемпе пĕрле çав ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем палăртса хумалла. Коопераципе колхозла суту-илĕве ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ лартнă задачăсен çӳлĕшне çĕклемелле.

Юлашкинчен тата çакна каламалла. Ялти халăх пасара тавар сутма кăна мар, хăйсен пĕлĕшĕсемпе тата тăванĕсемпе тĕл пулма та каять. Çавăнпа та пасар кунĕсенче халăха кинокартинăсем кăтартсан, концертсем иртерсен, лекцисем туса парсан питĕ усăллă пулнă пулĕччĕ. Çавăн пекех пасарсенче парикмахерскисем, фотографисем, килте кирлĕ япаласене, тумтир, атă-пушмак юсамалли мастерскойсем уçни те пысăк усă пама пултарать.

Çак ĕçсене туса иртерни советла суту-илĕве чăннипех те тивĕçлĕ пусăма çĕклеме пулăшĕччĕ.

К. ИЛЬИН.

Çĕнĕ фабрика тума тытăнчĕ

Нучаях пулмасть Шамаков юлташ ертсе пыракан экскаваторщиксен бригади çĕнĕ çурт никĕсĕ валли çĕр чавма тытанчĕ. Экскаватор тăпрана самосвал-автомашинăсем çине пăрахать те, вăна çийĕнчех аяккалла илсе кайса тăкаççĕ. Кунтах Юхтанов юлташ ертсе пыракан каменщиксен бригадипе Федорова юлташ ертсе пыракан бригада ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене пысăк та чыслă ĕç хушса панипе хавхаланса, куллен паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ, задание тăтăшах ирттерсе пурнăçлаççĕ. Çĕнĕ çурт виçĕ хутлă пулать. Проект тăрăх унăн тăршшĕ 224 метр ытла, сарлакăшĕ—30 метр пулмалла. Çак çурт калăпăшĕ пиншер çынна вырнаçтарма çитнĕ пулĕччĕ.

Мĕн тума кирлĕ пулать-ха Шупашкарти пир-авăр комбинатне çавăн пек пысăк çурт? Пирĕн республикăри пир-авăр фабрикисем катан пир тĕртсе кăлараççĕ. Ăна шуратса сăрлама тата илемлетме вĕсен оборудовани çук. Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ тĕртсе кăларакан шуратса пĕветмен сатина, сăмахран, Мускаври «Трехгорная мануфактура» комбинатне ăсатаççĕ.

Техникăлла проект тăрăх Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче катан пире çуса шуратакан, тасатакан, сăрласа илемлетекен тата типĕтекен пысăк фабрика пулмалла. Çав фабрикăра хамăр республикăри тата Тутар республикинчи фабрикăсем тĕртсе кăларакан катан пире шуратса сăрлама палăртнă. 1954 çулта ку фабрика ĕçleme тытăнать.

Катан пире шуратса сăрлас ĕçĕн технологийĕ кăткăс. Çавăнпа оборудование вырнаçтарса лартма, производствăна тĕрĕс йĕркелеме пысăк çурт кирлĕ. Халĕ комбинатра фабрика валли çĕнĕ çурт тума тытăннă.

Фабрикăра чи çĕнĕ йышши оборудовани: барабанлă сушилкăсем, пичетлемелли, крахмалламалли машинăсем, тĕрлĕ механизмсем пулаççĕ.

Фабрика çурчĕн пĕр пайĕнче рабочисем валли душ, медицина пункчĕ, библиотека, столовăй, гардероб т. ыт. те пулаççĕ.

В. АНТОНОВ.

Смотра хатĕрленеççĕ

ЕЛЧĔК. Районти учрежденисемпе предприятисенче, колхозсемпе шкулсенче 43 художествăллă пултарулăх коллективĕ ĕçлет Халĕ вĕсем 1954 çулта Чăваш АССР Культура министерствипе облпрофсовет ирттерекен районти художествăллă пултарулăх смотрне хатĕрленеççĕ.

Свердлов ячĕпе тăракан колхозри хор 1922 çултанпа ĕçлет Халĕ вăл 48 çынна пĕрлештерсе тăрать Ăна 1945 çултанпа клуб заведующийĕ М. Воронцов юлташ ертсе пырать. Смотра хатĕрленнĕ май, хор коллективĕн занятийĕсем эрнере икĕ хут йĕркеллĕ пулса иртеççĕ. Ташă ташлакансен ушкăнĕ чăваш тата вырăс халăх ташшисене ташлама вĕренет.

Колхозри драма коллективĕ районти смотрта кăтартма А. Островскин «Шухă вырăнта» ятлă комедине лартма хатĕрленме тытăннă.

Н. АМУРЦЕВ.

Выльăх-чĕрлĕх туянаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Большевик» колхоз ĕçченĕсем фермăсенче йышлă выльăх-чĕрлĕх усранипе пĕрлех хăйсен килĕсенче те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме тăрăшаççĕ.

Колхоз правленийĕ пулăшнипе юлашки вăхăтра колхозниксем 68 сурăх, 70 пуса яхăн сысна тата 6 ĕне туянчĕç.

Г. ЗАХАРОВ.

Мĕншĕн министерствăсенче хаçат-журнал сарас ĕç начар пырать?

— Ситес çулшăн хаçат-журнал çырăнтарас ĕç Шупашкарта мĕнле пырать?

Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствинчен пуçлăпăр. Кунти пуçламăш парторганизаци ку ĕçпе интересленмест теме çук. Партбюро секретарĕ Стасенко юлташ каланă тăрăх, профоргсен канашлăвне ирттернĕ, района каякан юлташсемпе колхозсенче тата МТС-сенче хаçат-журнал çырăнтарасси çинчен сӳтсе явнă.

Апла пулин те, ĕç ăнăçлă пулайман. Паянхи куна министерствăра ĕçлекенсем «Советская Чувашия» хаçата 11 экземпляр, «Коммунизм ялавĕ» хаçата 1 экземпляр çырăнса илнĕ «Çамрăк коммунист» хаçата пĕр экземпляр та сарман.

— Республикăри хаçатсене сарма васкама кирлех мар пулĕ,—тет партбюро секретарĕ Стасенко юлташ,—вăхăт пур-ха.

Министерствăра «Сельское хозяйство» хаçата тата ялхуçалăх ыйтăвĕсене сутатакан журналсене сарасси те çителĕксĕр пулса пырать. Кунта ĕçлекенсен йышĕ пысăк пулин те, «Сельское хозяйство» хаçата 5 экземпляр (50 экземпляр вырăнне), «Колхозное производство» журнала 15 экземпляр вырăнне 2 экземпляр, «Сад и огород» журнала 5 экземпляр вырăнне 1 экземпляр, «Животноводство» журнала 8 экземпляр вырăнне 3 экземпляр, «МТС» журнала 5 экземпляр вырăнне 1 экземпляр кăна çырăннă.

Ялхуçалăх ыйтăвĕсене çутатакан журналсене сарасси республикăри колхозсемпе МТС-сенче çителĕксĕр пырать. Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствинче ĕçлекенсем ку ĕçрен пачах пăрăннă.

— Эпир «Союзпечать» уйрăмĕнчен отчетсем ыйтма пултараймастпăр, пирĕн ун пек право çук.—теççĕ министерствăра.

Кăна ĕнтĕ вĕсем юри калаççĕ, «пĕлмен-илтмене» персен лайăхрах пулать пек вĕсемшĕн.

Пĕлтерĕпĕр. Республикăра «Сельское хозяйство» хаçата 4.500 экземпляр вырăнне 2 090 — экземпляр, «Достижения науки и передового опыта в сельском хозяйстве» 495 экземпляр, «Колхозное производство» журнала 1.500 экземпляр вырăнне 950 экземпляр çеç сарнă-ха. Республикăра уй-хир бригадисем кăна 3 пин ытла Вĕсенче кашниннче пĕрер экземпляр хаçат-журнал сарсан та плана тултарасси питĕ мала кайма пултарать Анчах Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви тата унăн пропаганда управленийĕ хаçат-журнал сарас ĕç çине çиелтен пăхаççĕ.

* * *

Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствинче те çак ĕç япăх пырать.

Пуçламăш парторганизаци секретарĕ П. Игнатьев юлташ акă мĕн калать:

— Эпĕ вăл ĕçпе халлĕхе интересленмен-ха, мĕншĕн тесен вăхăт пулмарĕ Çавăнпа та сире ун çинчен нимĕн те каласа пама пултараймастăп. Чимĕр кăштах тăхтăр-ха...

Çак сăмахсене каларĕ те, Игнатьев юлташ стенана шаккама пуçларĕ.

Кĕçех пĕр сотрудница чупса пычĕ.

— Алексеева пур-и унта?... Кала-ха ăна ман пата кĕме...

Парторганизаци секретарĕ министерствăра хаçат-журнал сарасси мĕнле пынине пĕлмест. Çавăнпа та унăн ирĕксĕрех общественнăй уполномоченнăйĕ Н. Алексеева юлташа чĕнсе илме тиврĕ.

Игнатьев юлташ сĕтелĕ çине общественнăй уполномоченнăй хаçат-журнал çырăнса илнисен списокне хучĕ.

— Э-э... Эпĕ кун пек пуласса кĕтмен. Начар-çке, питĕ япăх кун пекех пулсан. Çав арманти комсомолецсемпе те калаçса пăхмарăр-и?

Игнатьев юлташа хирĕç комсомол организацийĕн секретарĕ И. Яковлев юлташ ларать.

— Калаçаймарăмăр-ха, — терĕ вăл.

Игнатьев юлташ сĕтел çинчи списока вулама тытăнчĕ.

Министерство сотрудникĕсем паянхи куна мĕн пурĕ те 20 экземпляр кăна хаçат-журнал çырăнса илнĕ. Уйрăммăнах республикăра тухса тăракан хаçат-журналсене сахал сарнă. Кунта ĕçлекенсенчен çуррине яхăн чăвашсем. Анчах чăвашла хаçатсем пачах сарманни тĕлĕнтерет вара. «Советская Чувашия» хаçата та планпа 20 экземпляр сарма палăртнă пулсан. 7 экземпляр кăна çырăннă.

Министерство аппаратĕнче 15 коммунист ĕçлет. Хаçат-журнал çырăнтармалли срок вĕçлениччен шутлă кунсем юлчĕç. Анчах С. Ефимов, В. Перов, Е. Осипов, А. Савельев, Р. Фурман тата ытти хăшпĕр коммунистсем нимĕнле хаçат-журнал та çырăнса илмен. «Союзпечать» уйрăмĕ 4 экземпляр «Коммунист» журнал уйăрса панă Анчах ăна та пĕр экземпляр кăна сарнă.

Республикăри хаçатсем апат-çимĕç предприятийĕсем çинчен сахал мар çыраççĕ. çитĕнӳсене палăртаççĕ, ситменлĕхсене критиклеççĕ. Анчах апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствинче ĕçлекенсем республикăри хаçатсене çырăнса илесшĕн мар-ха Министр П Калинкина юлташ та республикăра тухса тăракан пĕр хаçата та çырăнса илмен.

* * *

Чăваш АССР Финанс министерствинче ĕçлекен работниксем чылайăшĕ ситес çул валли Мускаври, хамăр республикăра тухса тăракан хаçат-журнал çырăнса илнĕ. Çав хушăрах уполномоченнăй списокĕнче хăшпĕр ответлă работниксен хушамачĕсем çук.

— Чылай калаçрăм эпĕ çав начальниксемпе,—терĕ общественнăй уполномоченнăй Демидова юлташ çак «аслă» çынсемшĕн хăй айăпа кĕнĕ пек пулса. — Вĕсем яланах: кăшт тăхтăр-ха, ыран пулмасан тепĕр кунне тем пулсан та çырăнса илетпĕр, теме юратаççĕ.

Вулакансене пĕлсе тăма çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартăпăр. Спиридонов юлташ финанспа хуçалăх пайĕн начальникĕ пулса ĕçлет Вăл хаçатсем вуламасть теме çук. Пачах урăхла Вăл хаçатсенче пичетленекен хыпарсем çинчен юлташĕсем каланипе пĕлсе тăрать Тепĕр чухне тата министерство ячĕпе килекен хаçат-журналсенче республикăн кулленхи пурнăçĕпе паллашать. Уйрăмах районсемпе хуласенчи финанс органĕсемпе работникĕсен ĕçри ӳсĕмĕсем çинчен вулать Анчах... Спиридонов юлташ хăй валли хаçат çырăнса илме килĕшмест. Хампа юнашар ларса ĕçлекен юлташ хаçат çырăнса илет пулсан, мĕншĕн-ха манăн çырăнас, тесе шухăшлать пулас Спиридонов юлташ.

Министерство аппаратĕнче ĕçлекенсем чылай. Анчах кунта республикăра тухса тăракан хаçат-журнала сахал çырăннă.

Мĕншĕн çак министерствăра хаçат-журнал сарас ĕç çав тери япăх пырать? Мĕншĕн халиччен те кунта пур работниксене те килес çулшăн хаçат çырăнса илме хутшăнтарман? Çак ыйтусем çине министерствăри партбюро секретарĕ Ильин юлташ çапла ответлерĕ:

— Тĕрĕссипе каласан, эпир ку енĕпе çине тăрса ĕçлемен Вăхăт та пулчан.

Хаçат-журнал сарас енĕпе министерствăри партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем сахал интересленеççĕ. Партбюро секретарĕ калашле, работниксене кун çинчен пĕр хут каланă. Вара çакăн хыççăн хаçат сарас пирки никама та астутарман.

Обществăлла уполномоченнăй Демидова юлташ хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлипе туса пымасть теме çук Вăл министерствăри работниксем хушшинче хаçат-журнал çырăнасси çинчен калаçусем тăтăшах ирттернĕ. массăлла ăнлантару ĕçне кирлĕ пек йĕркелеме тăрăшнă. Анчах профсоюз организацийĕпе партбюро уполномоченнăя тивĕçлĕ пулăшу пулман Çакна каласа хăвармӑлла: министр заместителĕ Иртышов юлташ та подписка мĕнле иртнине тĕплĕн пĕлмест Эпир пынă кун çеç уполномоченнăя хăй патне чĕнсе илсе «мана пĕлсе тăма» тесе сведенисем пама ыйтрĕ.

Министерство работникĕсенчен хăшпĕрисем нумай вăхăтлăха командировкăна кайнă Вĕсенчен чылайăшĕ хамăр республикăри районсенчех Анчах партбюро секретарĕ те, обществăлла уполномоченнăй та вĕсене хаçат çырăнтарма тăрăшни сисĕнмест Вĕсем хаçат-журналсăр тăрса юлма пултараççĕ Паллах, министерство руководителĕсем кашни сотрудник мĕнле хаçат-журнал çырăнса илнине пĕлсе тăма тивĕçлĕ.

* * *

Чăвторгăн çĕвĕ çĕлекен мастерскойĕнче 40 çын. вĕсем хушшинче чăвашсем те чылай. Паллах, вĕсен чăвашла хаçатсем вулас кăмăл пысăк Мастерской 7 экземпляр хаçат-журнал çырăнса илнĕ.

—Чăвашлине те çырăнса илĕр,—сĕннĕ мастерской директорне П. Кольцов юлташа

— Кирлĕ мара ан калăрах. Пустуй ан та сыпăçăр. Пире чăвашла хаçатсем кирлĕ мар,—тенĕ директор.

Çапла вара, мастерской чăвашла хаçат-журнал çырăнса илмен.

Ялхуçалăх кадрĕсем хатĕрлекен вĕтам шкулта чылайччен обществăлла уполномоченнăй та пулман. Хаçат-журнал сарасси унта çителĕксĕр пырать.

Çакăн çинчен аса илтерсен, хулари «Союзпечать» уйрăмĕн начальникĕ Терентьева юлташ çапла ответлерĕ:

— Ăна эпир пĕлетпĕр-ха. Ситеймерĕмĕр унта.

Хаçат-журнал сарасси — политикăлла пысăк ĕç. Апла пулсан, ăна тивĕçлипе ирттерес пулать. Паллах, ăна Терентьева юлташ хăй вăйĕпех ăнăçлăн тума пултараймасть. Çавăнпа та ку ĕçпе КПСС хула комитечĕн те интересленмелле.

«Коммунизм ялавĕ» хаçат бригади:

В. МАКСИМОВ, Г. АНДРЕЕВ,

Н. ГЕРАСИМОВ.

Пĕр чĕлхерен

Калав

I.

Эсĕ ман пӳлĕме кĕтĕн те алăк патĕнчех чарăнса тăтăн, витĕрех кураймав кусусемпе малти кĕтесселле пăхса тем шырарăн. вара ылтăн рамкăллă Лев Толстой портречĕ çинелле тинкертĕн.

Сан çийĕнте авалхи тĕрĕллĕ шурă кĕпе, ху венчеге тăнă чухнехнех пуль: эсĕ сурпан-масмак сырнă, хурталлă кăвак саппун çакнă. Хĕрлĕ пурçăн тутăру айĕнчен шап-шурă çӳç пайăркисем тухса кайнă. вĕсене курсан, никам та сана сарă кĕтра пулнă теес çук Сан питçăмартисем типĕтнĕ панулми пек пĕркеленсе пĕтнĕ: эсĕ çакă çĕр синче ситмĕл те çичĕ çул тем те пĕр курса ирттерни пĕтĕмпех сăну çине çырăнса юлнă тейĕн.

Эсĕ килсе кĕрсен, пӳлĕме сар хĕвел кĕрсе сутатнăн туйăнчĕ Эсĕ мана: «лайăх-и?» тесе алă парсан, эпĕ темиçе çул каялла, вăрçă хыççăн, инçетри ют çĕршывсенчен хам çуралнă çĕршыва таврăннине аса илтĕм: ун чухне те çапла, асран кайми çĕршыв-аннеме курсан, савăнса та хурланса, сăмах чĕнейми тăрсаттăм...

Нимех те ӳпкелесе каламарăн, анчах ăшă кусусенче çакна вуласа ăнлантăм:

Эпĕ сана, ывăлăм, хам чĕре çумĕнче ӳтлентерсе çуи панă хам кăкăр сĕчĕпе тăрантарса, куççульпе шăварса ӳстернĕ: эсĕ шкула выçлă-тутлă чупнă чух эпĕ çĕварăмра татăка та сава парса янă. эсĕ вăрçă хирĕнче хыпар-хăнарсăр çӳренĕ чух эпĕ çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр сан çинчен шухăшланă.. Хам кайсан та халалăмпиле сана юлмалла. Çапах эсĕ тăван яла анчӳ патне. пырса курманни султалăк. Çав териех ĕç нумай-ши санăн, çав териех ерçместĕн-им эсĕ?» терĕç ывланнă кусусем. Ху пурпĕрех мана ăйăпламарăн:

— Хамах килсе курас шут тытрăм, ара.—терĕн йăлкăшса кулса (пĕлтĕр сан шăлусем тĕрĕсехчĕ, халĕ, ав, çӳлти ретре иккĕшĕ ӳкнĕ) —Тинех кăмăлăм тулчĕ ĕнтĕ, ачам... Лайăх пурăнатăн иккен... шалу та пĕчĕкех мар пуль-ха.. атем пулатăн... камччĕ ĕлĕк, колхозчен,—кĕтӳ ачиччĕ... çăпата сутса кĕнеке илеттĕн... Çав самана пулман пулсан, кам хурĕ пулăттăн ĕнтĕ... Ан ятла мана, са... са... савăннипе йĕретĕп...

Эпĕ мĕншĕн ятлам? Хăвăн ятламалла мана: эпир, ывăлсем, ӳсse çитетпĕр те, çунат хушнă кайăк чĕпписем евĕр, тăван йăваран аякка вĕçетпĕр; хăш чухне, инçетре, анне çинчен те кирлĕ чухлĕ шутламастпăр пуль; ĕç тесе, аннемĕрсене те мананçи пулатпăр пуль?

Савни те савниреп сивĕнет, юлташ та юлташрап ютшăнать, анчах амăшĕ ывăлне юратни—кирек хăçан та виçесĕр, иксĕлми-сӳнми хăватлă.

Аннесĕм! Санран та аслăрах Анне пур—Тăван çĕршыв. Ăна юрăхлă пулма пултарсан—сана та юрăхлă пулăпăр.

II.

Çуллахи кун пит вăрăм, ярa куна тем калаçмалăх та пур. Эсĕ хулари пурнăç çинчен, ман ĕçсем çинчен йĕрки-йĕркипе ыйтса пĕлтĕн, ял хыпарĕсем пĕлтертĕн. Ялйыш аван пурăнать иккен, килйыш та чиперех.

— Кăçал çамрăксем нумай мăшăрланчĕç, ара, колхоз пуян та—пурте туй тусах авланаççĕ.—терĕн эсĕ, вара куçăмран ӳкевлĕн пăхса каларăн:—Санпа тантăшсем пурте авланчĕç ĕнтĕ...

— Тырăсем лайăх-и?—ыйтрăм эпĕ, сăмаха юрнех аяккалла пăрса.

— Тырăсем кăçал питĕ вăйлă, алсапа вырмалла хулăн пулчĕç,—терĕн эсĕ. Вара пĕр хушă чĕнмерĕн.

Ĕçсĕр ларни—алăсăр ларнипе пĕрех, теттĕн ĕлĕк. Каллех çав сăмаха аса илтĕн Канасчĕ ĕнтĕ сан, ватăскерĕн! Анчах ĕмĕртен ĕçпе писĕхнĕ чăваш хĕрарăмĕ канас пурнăçа савмасть çав—хулана хăнана килнĕ-килменех яла туртăнма пуçларăн: килте хамсăр темĕе ĕнтĕ, çамрăксене шанса йĕрки пулас çук, пахчана выльăхсем кĕрсе тулчĕç пуль.. çĕрулмине сыснасем тăпăлтарса пĕтерĕç, купăстине качакасем кăшласа ярĕç, теме тытăнтăн. Пĕлетĕп: пахчине сансăрах асăрхĕç-ха ăна. ахаль ларас килменрен çеç пăшăрханатăн Мĕнле ĕç хушам-ши сана?

— Урама тухса çӳре кăшт. анне Атăл кур. Паян вырсарникун. Атăл хĕррине халăх нумай тухать Çынсемпе калаçкала. Каярахпа эпĕ те тухăп.

— И-и-и, мĕн калаçам ĕнтĕ эп тăм чĕлхепе: ара хама сутса ярсав та, вырăсла пĕр сăмах та пĕлместĕп. Ман вырăсла калаçни—шултра алапа шыв ăсна пекех,—терĕн эсĕ. Çапах та урама тухрăн.

III.

Акă вăл, Атăл!

Çирĕм çул каялла-ши е ытларах таши—хĕллехи каçсенче эсĕ мана Атăл хусахĕсем çинчен юмахсем ярса параттăн. Атăл паттăрĕсем çинчен хывнă юрăсене юрлаттăн—вара тĕлĕкре те аслă шыв курăнатчĕ.. Юмахра та Атăлччĕ, юрăра та Атăлччĕ; Атăл еннелле пăхса. эсĕ сантăлăк мĕнле пуласса е килес çул тырă мĕнле ăнасса калаттăн... Анчах Атăлне ху халиччен те курман-мĕн.

Акă вăл, Атăл!..

Аслă юханшыв анлăшĕпех сулă юхать, пăрахутсем, баржăсем иртеççĕ. Акă, вăл юрăри шурă пăрахут, Шупашкар тĕлне çитсессĕн чăтаймасăр-тусеймесĕр кăшкăртса ярать. Акă, сан юмахусенчи тавар кимĕчисем аясене ăлăк çынсем çыран хĕррипе Атăл тăрăх тăвалла сĕтĕрни çинчен калаттăн—халĕ ку баржăсем хăйсемех çӳреççĕ. Акă, хавасла çамрăк-кĕрĕм кимĕсемпе ярăнать, çав çамрăксем хушшинче, тен, ĕлĕкхи бурлаксен мăнукĕсем те пулĕ...

Эсĕ Атăл хĕрринчи бульварпа пыратăн. Сан уру айĕнче çатма пек яка асфальт, çул икĕ енĕпе—лапсăркка çăкасем. юнашарах—çамрăк сад, сад варринче—йăлтăртатса тăракан, ĕмĕр ванми çирĕп чултан тунă палăк. чăваш сăвăçин палăкĕ. (Астăватăн-и, ача чухне Сипли хĕрĕ çинчен йĕрсе вулаттăм? Ку палăка çав кĕнекене çыракана хисеплесе лартнă).

Юмах-и ку, чăн-и?

Сан юмаххусенче хăрушши те илемли те нумайччĕ, анчах эсĕ халĕ мĕн-мĕн курнине эпĕ пĕр юмахра та илтмен-ха; сан юмахри паттăрусем Атăл шывне пĕвелеме пултарнине те астумастăп. Акă халь...

Эсĕ Атăл хĕррипе хуçа пек саркаланса утатăн. Сан авалхи çи-пуçу çамрăксене илĕртет пулас. тен, вăл манăçа тухса пыракан юмахри вăхăтсене аса илтермест-ши? Сана, ватăскере, пурте хисеплесе çул параççĕ. Ăшă куçпа ăсатаççĕ. Эсĕ Атăл хĕррине тăвалла хăпартăн та ман хваттер умĕнчи сак çине канма лартăн.

IV

— Хулана килсе курас терĕн-им? Батарисем пулас?—тесе такам вырăсла ыйтрĕ санран.

— Нету вăт. вырăсла не снайăм. Сатис. ларса кан.—терĕн эсĕ.

Эпĕ уçă чӳрече витĕр урамалла пăхрăм. Сан çумна вырăс хĕрарăмĕ пырса ларчĕ. Вăл майралла тумланнă. Пĕрмечеллĕ кăвак сарашпанĕ ура тупанĕ таранах, хура тутăрне карчăкла çыхнă, кĕлесĕр пысăк пушмакĕсене улăшу тăхăннă. Ватă ĕнтĕ, ун пеккине чăвашсем: çăпатине каялла сыракан пуличченех ватăлса çитнĕ. теççĕ Çак кăвак çӳçлĕ карчăк та пĕр утмăл çул каялла, хĕр чухне, пушмакĕсене улăшу тăхăнман ĕнтĕ.

Эсир, икĕ ватă, калаçни мана мантан кулăшла пек, икĕ хăлхасăр этем калаçнă пек туйăнчĕ: эсĕ хăвăнне пуплетĕн, вăл—хăйĕнне,—кам мĕн каланине ăнланса илейместĕр.

— Нету вăл, вырăсла нету!—тетĕн эсĕ час-часах. аллусене саркаласа.—Ара, тăр-ухмах пек, ним ăнланмасăр ларатăп мар-и? Нету, тăхлачă, нету сăмахпа калайманнине пӳрнепе кăтартса пĕтереймĕн. Ара...

Хам ĕçе хăвăртрах пĕтерес тесе, эпĕ кантăка хупрăм та çырма пуçларăм.

Эсир сехете яхăн тем янраса лартăр. Сехет те иртрĕ пуль—çаплах калаçатăр. «Нету вăт» тени текех илтĕнмерĕ.

Ман хăлхана паттăр хула ячĕ пырса кĕчĕ: эсир иксĕр те Сталинграда асăнтăр. Кантăка каллех уçрăм.

— Ăçта каять-ши кун чухлĕ йывăç, тăхлачă?—ыйтрăн эсĕ, сулăсем çинелле кăтартса.

— Сталинграда,—терĕ вырăс хĕрарăмĕ, эсĕ мĕн ыйтнине тавçăрса.

— Сталинград?—терĕн эсĕ. — Сталинграда тесен—лайăх пĕлетĕп, тăхлачă: унта ман аслă кĕрӳ китлĕрсемпе çапăçса вилчĕ, ывăлăм аманчĕ... Ăнланатни? Сталинград... фронтта... сынок... ак çак уринчен...

Вырăс хĕрарăмĕ ăнланнă пек пуçне сулчĕ те тутăр вĕçĕпе куçĕсене шăлса илчĕ.

— Манăн та аслă ывăлăм Сталинградра... фронтра вилчĕ,—терĕ. — Кĕçĕнни Германире çухалчĕ...

«Германи» сăмаха эсĕ часах манаймăн: унта сан ывăлусем те фашистсене хирĕç çапăçнă...

— Вăрçă пуçлакан китлĕрсене пуçне пултарччĕ!—терĕн эсĕ. Вара пĕр хушă шăпах лартăр.

— Халь килте, семьере, йыш пур-и?—каллех сăмах пуçартăн эсĕ.

Вырăс хĕрарăмĕ «семье» тенине ăнланчĕ пулас

— Ватăлăх хĕрĕ Атăл пĕвеленĕ çĕрте, пысăк стройкăра ĕçлет, кĕçĕнни Мускавра вĕренет,—терĕ.

Эсĕ «аслă стройка» тенине ăнлантăн та:

— Пирĕннисем те пур унта,—терĕн, унтан хушса хутăн:—Мускав тесен — лайăх пĕлетпĕр-ха ăна, Мускавне, ара. Манăн та кĕçĕн ывăлăм унта, аслă шкулта вĕренет. Вăрçă тухмасан çапла вĕренĕччĕç те-ха çамрăксем. Мир кирлĕ халăха.

— Мир... Мир!—тет вырăс хĕрарăмĕ, санпа килĕшсе. Вырăс çынни хăвăн шухăшна ăнланнăшăн эсĕ савăнса кулатăн.

— Аслă хĕрне пĕлтĕр качча патăмăр. Кĕрӳ те вĕренет... Горьки хулинче... парти шкулĕнче вĕренет,—пĕлтерчĕ вырăс хĕрарăмĕ. кашни сăмахнех ăнланмалла уçăмлă калама тăрăшса.

Эсĕ «парти» сăмаха çеç лайăх астуса юлтăн пулмалла:

— Парти... парти!—терĕн çирĕплетсе.

Вырăс хĕрарăмĕ те эсĕ ăна ăнланнăшăн савăнса кулчĕ

— Парти... парти!—тенĕ вăл та пуçне сулса.

V

Эпĕ ним хускалмасăр сире итлесе лартăм.

— Мĕн калаçрăр çав териех, анне? Эсĕ вырăсла пĕлместĕнччĕ-çке? Пĕрне-пĕри ăнланса калаçрăр-и?—ыйтрăм эпĕ санран. вырăс хĕрарăмĕ кайсан.

— Мĕн ăнланмалли пултăр унта, ара,—терĕн эсĕ —Йăлтах хитре ăнланмалла: çынни ман пекех салтак амăшĕ, ман пурнăçпах пурăннă Икĕ ывăлĕ вăрçăра вилчĕç, тет, хĕрĕсем—пĕри Атăл пĕвеленĕ çĕрте ĕçлет, тепри, сан пекех, Мускавра вĕренет, асли качча тухнă... Хамăр çынах Пĕр савăнăçпа. пĕр хуйхăпа, пĕр шухăш-ĕмĕтпе пурăнатпăр та — мĕнле пĕр-пĕрне ăнланас мар.

Эй, аннесĕм! Çак сăмахсене эсĕ ним пăлханмасăр, лăпкăн каларăн. питĕ пысăк шухăша ахаль сăмахсемпех ăнлантартăн. Чăн та, кам ан ăнлантăр-ха «Мускав... парти... пысăк стройкăсем... мир»...сăмахсене! Çак сăмахсем урлă тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан халăхсем пĕр-пĕрне çывăх ăнланатпăр Аслă çĕршывăмăр та аслă йыш: ситмĕл те çичĕ тĕслĕ халăх. ситмĕл те çичĕ тĕрлĕ чĕлхе, анчах пурин те пĕр аслă тĕллев, пĕр аслă шăпа, пурте пĕр-пĕрне ăнланатпăр. пурте тăван.

Александр АРТЕМЬЕВ.

Демократиллĕ Германи Республики. Мейссен хулинче ялхуçалăхĕнчи производство кооперативĕсен работникĕсене вĕрентме аслă шкул уçнă. Вĕренме ялхуçалăхĕнчи производство кооперативĕсен председателĕсемпе заместителĕсене, çавăн пекех ялхуçалăхĕнче ĕçленĕ çамрăксене 200 çынна илнĕ. Программа тăрăх, политикăна вĕрентнисĕр пуçне, агрономи, зоотехника, ветеринари, ялхуçалăх экономики ыйтăвĕсене вĕренеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: шкулта вĕренекенсем занятире.

Центральбильд фотоÿкерчĕкĕ.

Монголи Халăх Республики 29 çул тултарни

УЛАН-БАТОР, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи халăхĕ Монголи Халăх Республикине туса хунăранпа 29 çул тултарнине паллă тунă.

«Унэн» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать:

Монголи Халăх Республикине туса хуни пирĕн çĕршывшăн историллĕ паллă событи пулса тăчĕ. Вăл ĕççыннисен анлă массисем ирĕклĕхшĕн тата никама пăхăнманлăхшăн пынă кĕрешÿре хăйсен шухăш-ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртнине кăтартса пачĕ. Çакă вăл пирĕн Халăх революцийĕн çĕнтерĕвне пула пулма пултарнă. Халăх революцине революциллĕ халăх партийĕ ертсе пычĕ.

Халăх влаçĕн çулĕсенче Монголи Халăх Республики, аслă Совет Союзĕ тăванла пулăшса тăнине пула, экономикăпа культура енĕпе питĕ пысăк çитĕнÿсем турĕ. Пирĕн государство хăйĕн пĕтĕм историйĕ тăршшĕпех халăхсем хушшинче мирпе туслăх политикине тытса пырать. Вăл Совет Союзĕ ертсе пыракан мир, демократи тата социализм лагерĕнче çирĕппĕн тăрать. Монголири ĕççыннисем халăх пурнăçне малашне лайăхрах аталантарас ĕçре хăйсем умĕнче пысăк задачăсем тăнине асра тытаççĕ. Вĕсем çак задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Чехословакире çĕнĕ чугун çул тăваççĕ

ПРАГА, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакире Прагăпа Брно хушшинче çĕнĕ чугун çул тăвас ĕç вĕçленсе пырать. Чугун çул тăршшĕ 120 километр пулмалла. Халĕ строительствăра юлашки ĕçсем пыраççĕ. 1953 çул вĕçленнĕ тĕле чугун çул тăрăх поездсем çÿреме тытăнаççĕ. Строительсен пысăк йывăрлăхсене çĕнтермелле пулнă, мĕншĕн тесен чугун çул тусемпе юханшывсем урлă иртет. Строительство пынă вăхăтра 20 кĕпер тунă. Пĕр кĕперĕ—Центральнăй Европăри чи пысăк кĕперсенчен пĕри. 14 виадук, 7 туннель тунă. Туннельсен тăршшĕ пĕтĕмпе 2.400 метр. 19 чугун çул станцийĕ, 18 платформа тунă.

Чехословакипе Швейцари хушшинчи суту-илÿ

ПРАГА, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Берн хулинче Чехословакипе Швейцари нумай вăхăтлăха тунă суту-илÿ договорĕ çинчен хыпар пусни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Договор Чехословакипе Швейцари хушшинчи суту-илÿ çыхăнăвĕсене малалла тĕреклетсе пыма лайăх майсем туса парать.

МАШИНĂСЕМ ТĂВАКАН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ÇИТĔНĔВĔСЕМ

ПЕКИН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри машина тăвакансем кăткăс машинăсемпе механизмсем туса кăларас ĕçе вĕренсе пыраççĕ. «Женьминьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Шанхайри, Цзиньаньри тата Китайри ытти хуласенчи машинăсем, электромоторсем тата суднăсем тăвакан заводсем кăçал Совет Союзĕнчи пек тĕрлĕрен промышленность продукцийĕ, вăл шутра металл касакан станоксем, хăватлă электромоторсем, генераторсем, трансформаторсем, тĕрлĕ йышши электрооборудовани, металсене электричествăпа шăратса çыпăçтаракан аппаратсем, пăс хуранĕсем, груз тиемелли баржăсем туса кăларма пуçланă. Китайри предприятисенче туса кăларнă машинăсемпе механизмсем, пĕлтерет хаçат, пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсен вăй-хăвачĕ те пысăк. Çак машинăсемпе механизмсем, техника енчен илсе пăхсан, Америкăри тата Европăри капитализмла çĕршывсенче туса кăларакан çавăн йышши продукцирен чылай лайăхрах.

Китайри суйлавсем

ПЕКИН, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайри пысăк центрсенчен пĕринче—Харбин хулинче суйлав вĕçленнĕ. Суйлава пĕр миллион çын ытла хутшăннă. Ку вăл çак индустри центрĕнчи мĕнпур суйлавçăсен 90 проценчĕ пулать. Суйланнă депутатсем хушшинче — паллă рабочисем, инженерсем, учительсем, вак халăхсен представителĕсем тата ыттисем те пур.

Хĕвеланăç Европăри ултă çĕршывăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Гаага хулинчи конференцийĕ

ГААГА, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Гаага хулинче Хĕвеланăç Европăри ултă çĕршывăн (Франци, Хĕвеланăç Германи, Итали, Бельги, Голланди тата Люксембург) ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕ уçăлнă.

Конференцире «Европăри политикăлла пĕрлешÿ» проектне туса хатĕрлемелле. Çав проект «Европа правительствине» тата «Европа парламентне» тума палăртать.

Конференци уçăлнă çĕре конференцие чĕнмен çынсене никама та кĕртмен. Конференцире Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Жорж Бидо çук. Ун вырăнне Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральнăй секретарĕ Александр Пароди пынă.

ПАРИЖ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Францин, Хĕвеланăç Германин, Италин, Бельгин, Голландин тата Люксембургăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Гаага хулинче уçăлнă конференцийĕ çинчен сăмах хускатса, Парижри хаçатсем Гаагăра пухăннă «Пĕчĕк Европăн» официальнăй представителĕсем хушшинчи «кичем пессимизмла шухăш-кăмăл» çинчен çыраççĕ, çавăн пекех конференцие хутшăннă çынсем хушшинче пысăк хирĕçÿсем пуррине палăртаççĕ.

«Паризьен либере» хаçат çакна кăтартса парать: Гаагăри конференцире Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ çук пирки, конференци «ĕçлĕ канашлу» кăна пулма пултарать. Канашлура «Европăри политикăлла пĕрлешĕве ертсе пырассин принципĕсене» сÿтсе яваççĕ. Çак канашлура Европăри конституцие пĕтĕмпех туса çитерессине кĕтме май çук.

Афганистанри хаçат США-н Азири политикине сивлет

КАБУЛ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Анис» хаçат пичетлесе кăларнă статьяра çапла калані: Пакистанăн генерал-губернаторĕ Гулям Мохаммед нумаях пулмасть США-на кайса килнĕ. Кайса килнин тĕллевĕ çак çĕршывсем хушшинче çар килĕшĕвĕ тăвасси пулнă. Çавăншăн Афганистанри общественность шикленет.

Пирĕншĕн, Хĕвелтухăçри халăхсемшĕн, тесе çырать хаçат, хамăрăн пурнăç шайне ÿстерессишĕн кĕрешмелли вăхăт çитрĕ. Пире тупăсемпе винтовкăсем мар, тулăпа рис ытларах кирлĕ. Çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем вырăнне пире çителĕклĕ таран тумтир кирлĕ. Пирĕн ялхуçалăхне, промышленноçа аталантармалла, хамăр çĕршывri çутçанталăк пуянлăхĕсене палăртмалла. Çак тĕллевсене пурнăça кĕртме пире мир тата хăрушсăрлăх кирлĕ.

Хаçат Америкăри влаçра тăракан ушкăнсен политикине тăрă шыв çине кăларать. Вĕсен политики Азире «хÿтĕленмелли» текен килĕшÿсем тăвассишĕн тăрать. Кун пек килĕшÿсене США та хутшăнмалла. Хаçат çакна кăтартса парать: США-па Пакистан хушшинче çар килĕшĕвĕ туни Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи мирлĕ пурнăçшăн хăрушлăх пулса тăрать.

Хĕçпăшалланнине пула

БЕРЛИН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçа хатĕрленсе укçа питĕ нумай расходланине пула, Аденауэр правительстви ĕççыннисен культура нушисем валли уйăрмалли укçана çулсерен чакарса пырать. Хĕвеланăç Германири шкулсем уйрăмах пысăк йывăрлăхсем тÿсеççĕ. «Альгемейне дейче лерерцейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бонн правительстви шкул нушисем валли пĕтĕм бюджетăн икĕ процентне кăна уйăрать. Çавăнпа та 1952 çулта Хĕвеланăç Германири хула округĕсенче 12 пин шкул çурчĕ çитменнинчен тĕлĕнмелли çук. Яланхи пекех, кашни класра 60 ачаран пуçласа 130 ача таран вĕренет.

Хĕвеланăç Германири ĕççыннисем шкул çурчĕсем çитменнишĕн, учительсене ĕçрен кăларнишĕн, шкулсене япăх пăхса тăнишĕн тарăхаççĕ. Юлашки вăхăтра тĕрлĕ вырăнсенче шкулта вĕренекенсен забастовкисем пулса иртеççĕ.

Хĕвеланăç Германири шкулсенче занятисем иртterme условисем япăх пулнă пирки, вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймannисен хисепĕ питĕ нумай ÿснĕ. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманшăн кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Хĕвеланăç Германири халăх шкулĕсенчен вĕренекенсен 30 процентне кăларса янă.

Мосаддыка суд туни

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Мосаддыкпа Иран çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă Рияхи генерал ĕçне пăхса тухакан çар сучĕн ноябрĕн 22-мĕшĕпе 23-мĕшĕнчи ларăвĕнче генеральнăй çар прокурорĕ Азмуде хăйĕн сăмахне малалла каланă.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче пулнă ларура Мосаддык суд председателĕнчен хăйне сăмах пама ыйтнă. Вăл çакăн пек пĕлтернĕ: ăна, Мосаддыка, вĕлерттерес тесе, прокурор ăна «турра ĕненмест» тесе айăплать, тенĕ.

Суд председателĕ прокурора малашне тĕн ыйтăвĕсене хускатма хушман.

Бенуа Фрашона ирĕке кăларнă

ПАРИЖ, ноябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: Парижри апелляци сучĕн следствисем ирттерекен палати паян Пĕтĕм Францири ĕçлев конфедерацийĕн генеральнăй секретарьне Бенуа Фрашона вăхăтлăха тĕрмерен кăларасси çинчен решени йышăннă. Ăна ноябрĕн 22-мĕшĕнче арестленĕ пулнă. Решенире çапла каланă: «чăнлăха палăртма» Фрашона тĕрмере тытса усрама кирлех мар, тенĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔН КИНО РАБОТНИКĔСЕМ ЧЕХОСЛОВАКИРЕ

ПРАГА, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер премьер-министр заместителĕ тата культура министрĕ Вацлав Копецкий Совет Союзĕн кино работникĕсен делегацине йышăннă. Делегацие Украина ССР Культура министрĕн заместителĕ И. И. Мазепа ертсе пырать. Делегаци Чехословакие Чехословакипе Совет Союзĕнчи туслăх уйăхлăхне хутшăнас шутпа пынă.

Пулас кулинарсем патĕнче

Шупашкарти «Волга» ресторанти кухня. Шап-шурă халатсем тăхăннă хĕрачасем аш-какайпа пахча çимĕç васкавлă тураççĕ. Вăхăтăн-вăхăтăн производство заведующийĕ Ю. Евлампьева юлташ хĕрачасене вĕрентсе калани илтĕнкелет.

— Оля, çак пулăпа пахча çимĕçрен апат хатĕрле-ха,— терĕ заведующи, пысăках мар çамрăк хĕрача çине пăхса. Ку вăл суту-илÿпе кулинари шкулĕнче вĕренекен Ольга Сергеева пулчĕ. Вăл практикăна килнĕ. Заведующи мĕн калanine пурне те ăста тума тăрăшать практикантка.

— Кĕçех тăвататăп,— терĕ Ольга, сĕтел çине тăрăхла тарелкăсемпе пахча çимĕçсем илсе пырса. Унччен те пулмарĕ, вăл хăярпа кишĕре çавракан касса вĕтетме тытăнчĕ. Тарелка çине пулă хучĕ те ун тавра çак çимĕçсене йĕркелесе вырнаçтарма тытăнчĕ. Унтан, хĕрлĕ кăшмана хитрелетсе касса чечек çыххи пек тунă хыççăн, ăна майлаштарса хучĕ.

— Питĕ аван, кунта сухан кăштах хурсан тата лайăхрах пулмалла. Апат та питĕ илемлĕ курăнать, унăн тутлăхĕ те лайăхланать,— терĕ Евлампьева практиканткăна. Унтан вăл хăй ĕçлесе кăтартрĕ.— Халĕ сĕтел çине те пама пулать ĕнтĕ...

Кухньăри тепĕр сĕтел çинче аш-какайран тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрлеççĕ. Пĕрисем котлетсемпе тефтельсем, теприсем — бифштекссемпе шницельсем тăваççĕ, висçĕмĕшĕсем аш-какая машинăпа вĕтетеççĕ. Кашниех ăста ĕçлет.

Практиканткăсем кашни ĕçе тирпейлĕ, кулинари правилисене çирĕп пурнăçласа тăваççĕ.

— Эпĕ инструкторсем вĕрентнине яланах асра тытатăп,—тет Ольга Сергеевăпа пĕрле вĕренекен Эмилия Ильмент.—Халĕ пулăран, пахча çимĕçрен тĕрлĕ апатсем, çăнăхран икерчĕсемпе вĕтĕ кукăльсем пĕçерме вĕренсе çитрĕм. Акă, пăхăр,—терĕ вăл пире противн çине вырнаçтарса хунă сап-сарă кукăльсем çине кăтартса.

Эмилия вĕренÿре лайăх ĕлкĕрсе пырать.

Паян Эмилия кухньăна ытти кунсенчинчен иртерех килнĕ. Производство заведующийĕ хушнипе хур-кăвакала тасатрĕ, тĕрлĕ апат-çимĕç пĕçерме аш-какая касăкăн-касăкăн турарĕ. Унтан сельдь пулла тĕрлĕ гарнирсем хурса илемлетрĕ те сĕтел çине пама хатĕрлесе хучĕ. Икерчĕ пĕçерме те вăхăт тупрĕ вăл.

—Клиентсем мĕн ыйтнине хăвăрах парăр,—терĕ заведующи практиканткăна çак ответлă ĕçе тума хушса.

— Юрать, юрать.

Эмилия хăвăрт та ăста ĕçленине курсан, вăл çак ĕçе темиçе çул туса пырать тейĕн. Чăн та, кăçалхи февраль уйăхĕнчен пуçласа практикăна çÿресе, вăл кулинари енĕпе чылай пĕлÿ илнĕ. Клиентсем çамрăк повар пĕçернĕ апат-çимĕçе кăмăллăн ырлареç. Юратнă ĕç ăнса пыни—пулас поваршăн пысăк савăнăç.

Ресторанта хатĕрлекен апат-çимĕç ассортименчĕ пысăк. Кунта тĕрлĕ йышши апатсем пĕçермелли паха оборудовани чылай. Çавăнпа практикăра пулакансем тĕрлĕ йышши апат-çимĕç пĕçерме лайăх хăнăху илеççĕ.

Республикăри суту-илÿпе кулинари шкулĕ вунă çула яхăн ĕçлет. Çак хушăра кунтан специалистсем нумай вĕрентсе кăларнă.

Кăçал поварсен ушкăнĕнче 30 çын вĕренет. Вĕсем икĕ çул хушшинче, пĕтĕмĕшле пĕлÿ илнисĕр пуçне, товароведени, кулинари предмечĕсене, апат-çимĕç хатĕрлемелли оборудование тата санитари правилисене вĕренеççĕ. Шкулта вĕренсе тухнă хыççăн вĕсем республикăри столовăйсене ĕçлеме каяççĕ.

Иккĕмĕш ушкăнра 40 çын вĕренет. Вĕсем промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç продукчĕсем сутмалли магазинсенче продавец пулса ĕçлеме вĕренеççĕ. Вĕсем шут ĕçне, таварсене йышăнма тата вĕсене усрама, ĕççыннисен ыйтăвĕсене культурăллă тивĕçтерме вĕренеççĕ. Пулас продавецсем те хулари магазинсенче практикăра час-часах пулса хăйсен специальноçĕ енĕпе хăнăху илеççĕ.

Партипе правительство советла суту-илĕве лайăхлатас тĕлĕшпе йышăннă постановлени шкулта вĕренекенсене чунĕререн савăнтарать. Вĕсем суту-илÿпе обществăлла апатлану предприятийĕсенче ĕçлеме квалификациллĕ специалистсем пулма тăрăшаççĕ.

Г. НИКОЛАЕВ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Волга» ресторанти производство заведующийĕ Ю. Евлампьева юлташ кулинари шкулĕнче вĕренекен Эмилия Ильмента аш-какайран апат-çимĕç пĕçерме вĕрентет.

С. ВИКТОРИНОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Кино

Лайăх картина

Çав кунсенче пирĕн республикăри экрансем çинче «Серебристая пыль» («Кĕмĕл тусан») ятлă нумай тĕслĕ çĕнĕ кинокартина кăтартма пуçларĕç.

Эстони драматургĕ, Сталинла премилауреачĕ Август Якобсонпа А. Филимонов сценарийĕ тăрăх РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ А. Роом лартнă çак фильм хальхи Америкăри капиталистсем, истори урокĕсене манса кайса, çĕнĕ вăрçă хатĕрленине, пĕтĕм тĕнчипех «пĕр Америка» тума ĕмĕтленсе, ирĕклĕхе юратакан халăхсене тĕппипех пĕтермелли калама та çук хăрушă хĕçпăшалсем шухăшласа кăларнине, çав вăхăтрах, «джунгли законĕсемпе» пурăнса, пĕр-пĕрне хуть те хăçан та çисе яма хатĕррине кăтартса парать.

Тÿрех калас пулать: «Мосфильм» киностудийĕ нумай пулмасть туса кăларнă çак «Серебристая пыль» картина—питĕ лайăх, кураканисене çав тери хумхантаракан, империализм лагерĕнчи шакалсене, çынçиенсене пĕтĕм чĕререн курайми тăвакан, яланах сыхă тăма вĕрентекен картина. Нумайччен асра юлать вăл, нумай шухăшлаттарать...

...Ĕçсем Америкăри пĕр пысăках мар хулара пулса иртеççĕ. Самуэль Стил, хими профессорĕ, хăйĕн учительне вĕлерсе унăн лабораторийĕнче хуçа пулса тăнăскер, Гитлер çарĕнче «уйрăм ĕçсем тăвакан» полковник пулнă нимĕçпе—Курт Шнейдерпа пĕрле «кĕмĕл-сутă тусан» шухăшласа кăларать. Çак çĕнĕ йышши хĕçпăшала вăл нумай хушă упăтесем çинче сăнать—çав тусанпа сапсан, лешсем калама çук асапланса вилеççĕ. Анчах Стила ку лăплантармасть-ха. Хăй патне çав изобретени пирки пĕлме чи пысăк трестсен представителĕсем пырсан, вăл вĕсене тÿрех:

— Опытсем тума эсир мана упăтесем мар, тыткăна илнĕ китаецсене е корейцсене парăр, вара эпĕ сире часах пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинче хуçа пулмалли çав тери лайăх хĕçпăшал парăп!—тесе хурать.

Питĕ тискеррĕн те хăрушшăн янраççĕ этем сăн-сăпатне çухатнă «ученăйăн» çак сăмахĕсем...

Стил «тусĕсем» унпа килĕшеççĕ. Анчах кореецсене е китаецсене илсе килесси вăраха кайма пултарать, çавăнпа та вĕсенчен пĕри, Брюс текенскер, «Кăнтăр енчи трест» представителĕ, губернаторпа каласса татăлать: ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсен митингĕнче тытса тĕрмене хунă негрсене часрах суд туса вĕсене вĕлермелли приговор йышăнмалла та, Стил аллине, опытсем тума памалла.

Губернатор, кунăн хăйне сахал мар укçа лекессине пĕлсе, ĕçе Брюс ыйтнă пек туса хурать. Ним айăпсăр негрсене Стил лабораторине пырса хупаççĕ. Халь ĕнтĕ опытсем упăтесем çинче мар, чĕрĕ çынсем çинче пулмалла!

Унччен упăтесем ларнă тимĕр клеткăсене лекнĕ негрсем хушшинче—Стил патĕнче çирĕп çул тарçăра пурăннă Мэри ятлă негр хĕрарăмĕн çамрăк ывăлĕ Бен. Кун çинчен пĕлсен, Мэри Стил умне чĕркуçленсе, ывăлне хăтарма тархаслать, анчах унăн хуçи ăна тапса ывăтать кăна...

Негрсене тĕрĕс мар суд тунине пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă халăх пит те аван пĕлсе тăрать. Губернатор патне пиншер телеграмма пырать: негрсем айăплă мар, хăтарăр вĕсене!..

Çак кунсенче Стил арăмĕн малтанхи упăшкинчен юлнă ывăлĕ Аллан киле таврăнать. Вăрçă вăхăтĕнче вăл Америка çарĕнче офицер пулнă, амансан тыткăна лексе, нимĕç фашисчĕсен вилĕм лагерĕнче нумай хушă пурăннă, кайран, киле таврăнсан, çартан тухнă та, миршĕн кĕрешекенсен ретне тăнă.

Негрсене суд тунине пĕлсен, вăл Амстронг тухтăрпа—таса чунлă, ырă кăмăллă çынпа пĕрле губернатор патне каять, айăпсăр çынсене ирĕке кăларма ыйтать, анчах губернатор вĕсен сăмахĕсене хăлхана та чикмест.

Çав вăхăтрах Стилăн хăрушла изобретенийĕ тавра вăрттăн кĕрешÿ пуçланса каять, чăн-чăн шакалсен кĕрешĕвĕ. Кăнтăр енчи трестпа Хĕвелтухăç енчи трест представителĕсем—Брюспа Кеннеди — Стила кашни хăй майлă çавăрса çитерессишĕн. Кеннеди Стила укçа сĕнет, анчах лешĕ ытла нумай ыйтать. Кеннеди ун чухлĕ пама пултараймасть. Кун пек ĕç тухманнипе, вăл Стил помощникĕпе, Шнейдерпа каласса татăлать. Шнейдер Стилăн айвантарах ывăлне, Гаррине, ашшĕн çăра уççисене илсе, кирлĕ чертежсене вăрлама хушать. Анчах капла та ĕç ăнмасть—лабораторине кайсассăн Гарри хайхи «кĕмĕл тусан» çине пырса тăрăнать те, çав тери асапланса вилет. Унăн вилĕмĕ куракансене савăнтарать кăна: Стил негрсене вĕлерессĕнччĕ, анчах ун вырăнне хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлĕ, ашшĕ пекех негрсене курайманскер, Бена тытса хупма пулăшнăскер вилет!

Кеннедипе ăна пулăшакан бандитсем халь Стила вĕлерессипе хăратаççĕ, чертежсене пама хушаççĕ, анчах та каллех нимĕн те илеймеççĕ—Стилăн чĕри çурăлса каять.

Ку хушăра Алланпа унăн тусĕсем — рабочисем, миршĕн кĕрешекенсем хытă тăрăшаççĕ. Негрсене Стил лабораторине кайса хупнине пĕлсен, вĕсем ушкăнĕпех унта кайса, тыткăнри çынсене хăтараççĕ. Ку вара пурне те питĕ савăнтарать...

Кунпа ĕç пĕтмест-ха. Аллан, унпа пĕрле рабочисем те, хăтарнă негрсем те, çав шутрах Бенпа Мэри те, халь кăна Стила вĕлерсе пăрахнă шакалсем патне пырса тухаççĕ. Кусем вара хăйсем те вилес пекех хăраса ÿкеççĕ. Чунтан курайманскăр, йĕрĕнсе пăхаççĕ рабочисем çав ик уралла тискер кайăксем çине.

Аллан пурин ячĕпе те калать вĕсене:

— Хăçан та пулин, халăх сучĕ тăрăх, эсир хăвăрăн пурнăçăрсене çакса вĕлермелли такан çинче вĕçлĕр-ха!

Çак сăмахсем чăн-чăн приговор пек илтĕнеççĕ, мĕншĕн тесен çĕр чăмăрĕ çинчи ĕççыннисем тĕнчене каллех вăрçă вутçулăмĕ ăшне чикме, миллионшар çынсене вĕлерсе тăкма, çынсен юнне тăкса пуйма ĕмĕтленекенсене нихçан та каçарас çук.

Ку кинофильма эпир пурне те курма сĕнетпĕр.

Юлашкинчен çакна калас килет. Пĕлтĕрпе кăçал чылай кинокартинăсене чăвашла калаçакан туса кăларчĕç. Ку питĕ паха, усăллă ĕç. Çав «Серебристая пыль» ятлă картинăна та чăвашла куçарса кăларсан аван пулмалла.

Л. АГАКОВ.

Шахмат вăййипе хулара мала тухассишĕн

Шупашкарта шахмат вăййи енĕпе хулара мала тухассишĕн ăмăрту пырать. Çак ăмăртура хулари паллă спортсменсем тĕл пулаççĕ.

Ноябрĕн 26-мĕшĕнче малтанхи кун пуçланă вăйăсене выляса пĕтернĕ. Худовпа Воронков хушшинчи вăйă никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. Гуляев Скворцовран выляса илнĕ. Изосимовпа Федоров хушшинчи тĕлпулу никам çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. 36-мĕш хут тухнă хыççăн Чугунов Онисифорова çĕнтернĕ. Широковăн Сидоровпа тĕл пулнă чухне выляса илме май пулнă. Анчах вăл çак майпа усă курайман, вăйă Сидоров çĕнтернипе вĕçленнĕ. Гуляевпа Чугунов хушшинчи тĕлпулура Гуляев выляса янă.

Тăхăр вăйă хыççăн Чугунов 9 очко илме май пур çĕрте 8 очко, Сергиевский 8 очко илме май пур çĕрте 7,5 очко, 9 очко выляса илме май пур çĕрте Гуляев 6 очко, Сидоров 5,5 очко, Воронковпа Изосимов 4,5-шер очко пухнă.

В. СЕРГИЕВСКИЙ,

пĕрремĕш разрядри шахматист.

КĔСКЕН

Колхоз тупăшĕ ÿсет. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Молния» колхозра икĕ электростанци, икĕ арман тата çăм тапмалли машинăсем ĕçлеççĕ. Кунта электричество вăйĕпе авăн çапаççĕ. Çăм тапмалли машина колхоза виçĕ уйăх хушшинче 10 пин тенкĕ ытла тупăш панă.

П. ГЕРАСИМОВ.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Не называя фамилий».

Спектакльсем 19 сехет 30 минутра пуçланаççĕ.

ÇАМРАКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 29-мĕшĕнче кăнтăрла тата каçхине «Цитадель славы».

Кăнтăрлахи спектакль 14 сехетре, каçхине—19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 29-мĕшĕпе 30-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Серебристая пыль».

Чăваш АССР-ĕнчи выльăх-чĕрлĕх усракансене пĕлсе тăма

Выльăх-чĕрлĕх усракан предприятисемпе учреждениСен, организацисен, колхозсемпе совхозсен, пулăшуллă хуçалăхсен руководителĕсен, çавăн пекех уйрăм çынсен те çакна пĕлсе тăмалла:

Выльăхсене килте пусма, пуснă сыснасене вĕтме тата шывпа вĕрилеме, ерекен чирпе мар, ăнсăртран вилнĕ выльăхсене тирне сÿмесĕр пытарма юрамасть.

«Заготживсырьен» выльăх пусмалли пункчĕсенче тата колхозсенчи выльăх пусмалли площадкăсенче çеç выльăх пусма юрать.

«Заготживсырье» пункчĕсенче выльăхсене лайăх пусса тирпейлеççĕ, тиршĕн унтах укçа тÿлеççĕ, промышленность таварĕ илме квитанци параççĕ.

Выльăх пусмалли пунктра сÿнĕ тир лайăх пулать, пăсăлмасть. 1-мĕш сортлă 25 килограмм таякан тиршĕн пĕр мăшăр атă çĕлемелĕх тавар параççĕ, çав тирех 4-мĕш сортлă пулсан, вара тир паракан пĕр мăшăр путуш е пĕр мăшăр атă пуçĕ тумалăх сăран çеç илет.

Выльăх пусса панăшăн çирĕплетнĕ таксăпа укçа илеççĕ.

ГРАЖДАНСЕМ! Выльăхсене «Заготживсырье» пункчĕсенче е колхозсенчи площадкăсенче специалистсене пустарăр.

Çапла тусассăн выльăх тирĕ лайăх пулать, государство промышленноçĕ чи лайăх атă-пушмак, тир-сăран туса кăларма чĕртавар ытларах илет.

«Заготживсырье» сурăхпа качака çăмĕ, йăлтăх çăмĕ, мамăклă тирсем, сурман пыршă тата выльăх хÿрипе çилхине сутăн илет.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ ЧĔРТАВАРĔ ТАТА ПУШНИНА ХАТĔРЛЕКЕН КАНТУР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09392 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2850. Тираж 20.000 экз.